Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 АВГУСТ 3 ЙУНКУН 177 (4990) №

# Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухать. ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АСС Республикӗн Верховней Совечӗн хаҫачӗ. Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—57. Ред. заместителӗн 0—88. Редакци секретарӗн 4—40. Дежурнӑйӑн 6—23

## Пӗтӗм Союзри халӑх переписӗ

Ийулӗн 26-мӗшӗнче ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ „1939 ҫулта Пӗтӗм Союзри халӑх переписне ирттересси ҫинчен“ постановлени кӑларчӗ.

Социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршывӗнчи халӑх переписӗ халӑх хуҫалӑхӗ тӗлӗшӗнчен те, куљтурӑ тӗлӗшӗнчен те пит те пысӑк выранта тӑрать. Вӑл государствӑн пысӑк та ответлӑ ӗҫӗ. Перепис пирӗн ҫӗршывра сталинла пилӗкҫуллӑхсем хушшинче пулса иртнӗ пур улшӑнусене те кӑтартмала.

Ленин: „социалисӑм—вӑл учот“,—тесе вӗрентнине пурте лайӑх пӗлеҫҫӗ. Сталин йултӑш уйӑрӑмӑнах ҫакна палӑртать:

„Учотсӑр нимӗнле, строителствӑ ӗҫӗ те, нимӗнле государствӑ ӗҫӗ те, нимӗнле план ӗҫӗ те пулма пултараймасть. Учот хӑй статистикӑсӑр пулма пултараймасть. Статистикӑсӑр учот пӗр утӑм та малала кайаймӗ“.

Пирӗн тӑван ҫӗршывӑн пур пуйанлӑхӗсене шута илес никӗс—вӑл пирӗн ҫӗршыври ҫынсене пурне те шута илесси пулать. Пирӗн ҫӗршывра ҫӗс ӗнтӗ ҫынна хытӑ чыслаҫҫӗ, пирӗн ҫӗршывра ҫӗс ҫын пур капиталсенчен те чи хакли, чи пахи шутланать. Пирӗн ҫӗршывра ҫӗс халӑхӑн телейӗ, раскалӗ хӑйӗн аллинче.

Совет халӑхӗ хӑватлӑ та аслӑ. Совет халӑхӗсен туслӑ ҫемйинче хӑвӑрт аталанса ӳссе пырать пирӗн чӑваш халӑхӗ. Чӑваш халӑхӗн йышӗ пит те пысӑк хӑвӑртлӑхпа ӳсет. Совет Союзӗнчи кашни ҫул хутшӑнакан ҫынсен шучӗ Финљандири пурӑнакан халӑх шучӗ чухлӗ шутланать. Чӑваш республикенче те халӑх хӑвӑрт хутшӑнать. Ачасем ҫулран ҫул ытларах та ытларах ҫуралаҫҫӗ, вилесси сахалланса пырать.

Ӗлӗк кайа йулнӑ, тӗттӗм, трахомлӑ, икӗ хутлӑ пусмӑра тӳссе пурӑннӑ чӑваш халӑхӗ—халӗ, Ленин—Сталин наци политикине пурнӑҫа кӗртсе пынипе, Совет Союзӗнчи халӑхсен туслӑ ҫемйинче малта пыракан халӑхсенчен пӗри пулса тӑчӗ.

Сталинла пилӗкҫуллӑх ҫулӗсенче пирӗн Совет Союзӗ тӗпренех улшӑнчӗ. Вӑл кайа йулнӑ йалхуҫалӑхлӑ ҫӗршывран вӑйлӑ индустрилӗ, ҫӗнӗ техникӑлӑ ҫӗршыв пулса тӑчӗ. Тӗпренех улшӑнчӗ Чӑваш ҫӗршывӗн сӑн-сӑпачӗ те. Халиччен пушхир, вӑрман, лачака пулнӑ вырансенче социалисӑмлӑ ҫӗнӗ хуласем ҫитӗнчӗҫ. Ҫӗмӗрле комбиначӗ, Куславкка комбиначӗ, Канашри вакунсем йусакан савӑт—вӗсем пурте сталинла пилӗкҫуллӑх ҫулӗсенче ҫуралса ҫитӗннӗ. Халӗ Ҫӗмӗрле хули ларакан выранта нумайах та пулмасть сӗм вӑрман кашласа ларнӑ. Кӗске срукрах кунта промышлӗннӑҫлӑ хула пулса тӑчӗ. Канаш хуличе нумайах та пулмасть, 1923 ҫулта кӑна, мӗн пурӗ те 1676 ҫын ҫӗс пурӑннӑ. Пӑхӑр-ха халӗ мӗнле! Канаш—халӗ Чӑваш республикӗнчи пысӑк хуласенчен пӗри. Хулара пурӑнакансен шучӗ кӗске срукрах темиҫе хут ӳсрӗ. Унта халӗ 15 пине йахӑн ҫын пурӑнать.

Чӑваш халӑхӗн куљтури халиччен курман хӑвӑртлӑхсемпе ӳсет. 1926 ҫулта шута илнӗ тӑрӑх Чӑваш республикӗ талкишӗнчи халӑх хушшинче—894.749 ҫын хушшинче—хут пӗлекеннисем мӗн пурӗ те 325.386 ҫын ҫӗс пулнӑ. Урӑхла каласан, хут пӗлекенсен хисепӗ—36,4 процент кӑна шутланнӑ. Хӗрарӑмсем хушшинче хут пӗлекенсем татах та сахалтарах пулнӑ. 469.440 хӗрарӑм хушшинче хут пӗлекенсем 106.421 ҫын пулнӑ, йе 22,7 процент. Халӗ хут пӗлменнисем пӗрерӗн кӑна шутланаҫҫӗ.

1913 ҫулта Чӑваш республикӗ талкишӗнче пурӗ 463 шкул пулнӑ, 1937 ҫулта—1038. Учителсем 1194 ҫын пулнӑ, халӗ—6.048 ҫын. Аслӑ шкулсем пулман, халӗ—4. Аслӑ шкулсенче 1.086 ҫын вӗренет.

Совет халӑхӗ хӑйӗн ҫӗнтерӗвӗсен ҫимӗҫӗсемпе ӳсӑ курса телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫпа пурӑнать. Пирӗн ҫӗнтерӳсене Сталинла Конституцине ҫырса хунӑ.

Ҫак ҫӗнтерӳсене туллин палӑртма, пирӗн ҫӗршывра социалисӑм мӗнле аталанса пынине кӑтартма пӗтӗм халӑх переписне ирттереҫҫӗ. Перепис халӑхӑн нушисене, халӑха мӗн кирлине палӑртмала: халӑх государствӑран мӗн ыйтать, мӗнчул шкул, пуљницӑ, йаҫлӗ, миҫе учител, агроном, тӳхтӑр кирлӗ т. ыт. те. Ҫынсен шутне тӗрӗс учота илни ҫыншӑн тӑрӑшассине лайӑхлатма, вӗсен куљтурине ӳстерме татах та пысӑк майсем парӗ.

Халӑх переписӗ питех те ответлӑ ӗҫ. Ҫакна халӑх тӑшманӗсем те шута илеҫҫӗ. Пурте пӗлеҫҫӗ 1937 ҫулта перепис ирттернине. Халӑх тӑшманӗсем, халӑх хуҫалӑхне шута илекен управленисенче йертсе пырас ӗҫсене кӗрсе ларса, переписе тӗрӗс ирттермен. Вӗсем переписе статистикӑ науки вӗрентнӗ пек; правителствӑ панӑ кӑтартусем тӑрӑх ирттермен. Вӗсем статистикӑ ӗҫне хакламан. Халӑх тӑшманӗсем перепис ирттерекенсене сӑтӑрла кӑтартусем панӑ, ҫавӑнпа та чылай вырансенче ҫынсене шута илмесӗрех, перепис листине кӗртмесӗрех хӑварнӑ. 1937 ҫулхи переписе бӳрократла мелсемпе ирттернӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1937 ҫулхи ҫенӑаберӗн 25-мӗшӗнче йышӑннӑ хӑйӗн постановленийӗнче: 1937 ҫулта переписе ирттернине — ҫителӗксӗр, перепис материалӗсене — тӗрӗс мар, тесе палӑртнӑ. Правителствӑ ҫавӑнтах халӑх хуҫалӑхне шута илекен тӗп управленине 1939 ҫулхи йанвар уйӑхӗнче халӑх переписне ҫӗнӗрен ирттерме хушса хӑварчӗ.

Пулас перепис Совет Союзӗнче пурӑнакан ҫынсен шутне тӗрӗс кӑтартмала. Халӑхӑн шутне социаллӑ сий, наци, професси тӗлӗшӗнчен, унӑн куљтурлӑхне т. ыт. йенчен те туллин кӑтартмала. Переписӗн материалӗсенче пирӗн ҫӗршыври пӗтӗм тӗнчипе паллӑ социалисӑмла ҫӗнтерӳсене уҫҫӑн кӑтартмала. Перепис итогӗсем сталинла виҫҫӗмӗш пилӗкҫуллӑх ҫулӗсенче тумали хуҫалӑхпа куљтурӑ строителствинче пит те кирлӗ материалсем пулса тӑрӗҫ.

Переписе паха, пур йенчен те тӗрӗс, лайӑх, йӗркелӗ ирттересси, пӗтӗм статистикӑ аппаратӗн ҫеҫ мар, мӗн пур партипе совет организацисен хисеплӗ ӗҫӗ.

Перепис ирттерме хатӗрленес та та перепис ирттерес ӗҫсене совет общественнӑҫне, массӑна, обчӑлӑ организацисене анлӑн хутшӑнтармала.

Перпис ирттерекен кадрсене тимлӗн тӗрӗслесе пухмала: вӗсем политикӑ тӗлӗшӗнчен, ӗҫ тӗлӗшӗнчен йурӑхлипе йурӑхлӑ маррине хытӑ санамала. Перепис ирттерме пур работниксене те лайӑх вӗрентсе хатӗрлени, перепис ирттерекенсен вайне тӗрӗс йӗркелени, вӗсен хушшинче ҫирӗп дисциплинӑ йӗркелени кирлӗ.

1937 ҫулта перепис ирттерес тӗлӗшпе пирӗн республикӑ Тутар тата Мари республикӗсемпе ӑмӑртӑва тухрӗ. Вӑл ӑмӑртура пирӗн республикӑн мала тухмӑ; переписе правителствӑ кӑтартса панӑ сруксенче тата паха ирттерме мӗн кирли пурте те пур.

## ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн

### УКАЗӖ

**Пограничник-красноармеӗцсене Н. И. Пучков, А. С. Чеботарев, Н. Л. Скотникӑв тата В. Г. Колыхалӑв йултӑшсене „Красная Звезда“ орденӗпе наградӑласси ҫинчен**

Государствӑ чиккисене сыхлавӑ ҫӗрте пархатарлӑхпа геройлӑх палӑртнӑшӑн пограничник-красноармеӗцсене Николай Иванӑвич Пучков, Алексей Сергейӗвич Чеботарев, Николай Леонтийӗвич Скотникӑв тата Ваҫилий Григорийӗвич Колыхалӑв йултӑшсене „Красная Звезда“ орденӗпе наградӑлас.

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ М. Калинин.

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн Ҫекретарӗ А. Горкин.

Мускав, Кремљ. 1938 ҫ. августӑн 1-мӗш.

## Йапони ҫарӗсем ҫӗнӗ провокаци туса совет территорийӗ ҫине тапӑнса кӗни ҫинчен

ТАСС авторитетлӑ ҫынсенчен илнӗ сведенисем тӑрӑх, Хасан кӳлли районӗнче совет чаҫӗсемпе Йапони чаҫӗсем хушшинче пулса иртнӗ тытӑҫу ҫакӑн пек пулса иртнӗ.

Ийулӗн 29-мӗшӗнче Йапони отрйадне вӑл туртса илнӗ Безымйаннайа йатлӑ высота (ҫӳлӗ вырӑн) ҫинчен хӑваласа йанӑ хыҫҫӑн, йапонӗцсем совет территорийӗ ҫинче вырнаҫса тӑракан Заозернайа (Чанкуфын) йатлӑ высотана тӗлметӗл выранта пӗр дивизи чухлӗ шутланакан ҫарсем пухса тӑратнӑ.

Ийулӗн 31-мӗшӗнче ҫӗрле 3 сехетре Йапони ҫарӗсем, артиллерирен персе хӳтӗленсе, сасартӑк Совет Союзӗн чикӗри застави ҫине тапӑннӑ, ӑна Заозернайа высота патӗнчен кайала хӗссе чакарнӑ. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах Йапони артиллерийӗ ҫывӑхри ытти высотасем ҫине тата, совет подкрепленийӗсене пыма чӑрмантарас шутпа, ҫав высотасем хыҫӗпе ирттекен ҫул ҫине персе тӑма пуҫланӑ. Артиллери пулӑшнипе Йапонин ҫуран ҫарӗ совет территорийӗ ҫине тӑвата километра ҫити шалала кӗме пултарнӑ. Советӑн темиҫе сехетрен пырса ҫитнӗ регуљарлӑ чаҫӗсем Йапони ҫарӗсене, совет территорийӗ ҫинчен хӑваласа кӑларнӑ.

Икӗ йенчен те аманнисем тата вилнисем пур. Йапонӗцсен вилнисемпе аманнисем 400 ҫынна ҫити шутланаҫҫӗ. Йапонӗцсем совет территорийӗ ҫинче 5 тупӑ, 14 пулемет тата 157 винтовкӑ (патрунсемпе пӗрле) пӑрахса хӑварнӑ. Совет йенчен аманнисем 55 ҫын, вилнисем 13 ҫын. Кунсӑр пуҫне, пӗр совет танкӗпе пӗр тупӑна сийенленӗ. Разведкӑ самољочӗ ҫинчен парашӳтпа сиксе аннӑ пӗр совет љотчикӗ йапонӗцсен аллине лекнӗ пулљ, тесе шухӑшлаҫҫӗ.

Йапони ҫарӗсем тапӑнса кӗриччен те, ҫавӑн пекех ҫапӑҫу пынӑ вӑхӑтра та совет ҫарӗсем Манчжури чиккине пӗрре те пӑсман, ҫакна пула вӗсем Йапони захватчикӗсене хупӑрласа илме йе вӗсен флангне кӗме пултарайман.

Совет ӗҫӗсен Токиори поверенайне Йапони правителствине вӑйлӑ протест пама тата ӑна ҫакӑн ҫине ҫавӑрӑнтарса пӑхтарма хушнӑ: совет территорине никам пырса тӗкӗнмеле маррине хисеплеме шухӑшламан Йапони военшчини туса пыракан ӗҫсенчен Йапонишӗн хайар та хӑрушӑ ӗҫсем тухса тӑма пултараҫҫӗ; совет территорин чиккисене вырӑс-китай догӑварӗсем ҫинче палӑртса ҫирӗплетнӗ, ҫав догӑварсем ҫумне хушса хунӑ, Китай представителӗсем алӑ пуснӑ картӑсем ҫинче уҫҫӑн та паллӑн кӑтартса хунӑ.

## Совет Союзӗ тӑшмансем йунанинчен хӑрамасть

ИВАНӐВА, августӑн 1-мӗш. (ТАСС). Вӑрҫа хирӗҫле кун йачӗпе хулари 30 пин ӗҫҫынни куљтурӑпа каму паркне пуҫтарӑнса митинг тунӑ.

Совет Союзӗн мӗн пур халӑхӗсемпе пӗрлех, Иванӑвӑри текстиљщиксем хӑйсем Ленин—Сталин партийӗ тавра пӗтӗҫнине, тӑван ҫӗршыва вӗсем кирек хӑш минутра та хӳтлеме хатӗр тӑнине кӑтартса панӑ.

„Йапони самурайӗсем асра тытчӑр,—тенӗ митингра допризывник Новоселӑв йултӑш,—Совет халӑхӗ вӗсен йунанинчен хӑрамасть, сталинла ҫамрӑксем партипе правителствӑ пӗрре чӗнсенех социалисӑм ҫӗршывӗн мирлӗ ӗҫне пӑсма хӑтланакан кирек мӗнле тӑшмана та бољшевикла отпор пама хатӗр“.

Митингра пулнисем питӗ пысӑк ҫӗкленӳпе Сталин йултӑш патне саламлӑ ҫыру йанӑ.

Митинг хыҫҫӑн паркра массӑлӑ гуљяни тата Осоавиахимӑн Иванӑвӑри кавалери шкулӗнчи курсантсен ӑмӑртӑвӗсем пулнӑ.

## Пирвайхи авансем

„Свободная“ ертелри колхозниксем Ново-Ваҫилйӗвск районӗнче (Днепропетровск облаҫӗ) нуринчен малтан пӗрчӗлӗ тырӑсене вырса пуҫтарса пӗтернӗ. Вӗсем ӗнтӗ кашни ӗҫкунӗ пуҫне 5-шер килограм аванс илнӗ. Иртнӗ ҫулта ҫак ертелте ӗҫкунӗ пуҫне 1 килограм та 700 грам тырӑ тивнӗ пулнӑ.

Ку ертелри колхозник Иван Григорийӗвич Шийан малтанхи аванс шучӗпе 4.500 килограм тырӑ тата 630 тенкӗ укҫан илнӗ.

Колхозниксем халех ӗнтӗ хӑйсен ытлашши тыррине кооперацине сӑнсе, тӗрлӗрен промышленнӑҫлӑ тата куљтурлӑ таварсем илме заказ параҫҫӗ. Колхозниксем икӗ мотоцикл, 30 велосипед, атӑ-пушмаксем, мануфактурӑ, костумсем, патефонсем тата ытти куљттаварсем илме нумай заказсем панӑ.

(ТАСС).

## Пиллӗкмӗш полк историйӗ

Ийулӗн 31-мӗшӗнче Мускавра Хӗрлӗ Ҫарӑн Тӗп музейӗнче чаплӑ выставкӑ уҫӑлнӑ. Унӑн нумай вӑхӑтранпа усраннӑ експоначӗсене, фото-ӳкерчӗкӗсене, листовкисене, хаҫачӗсене, йалавӗсене хумханса пӑхатӑн.

Пиллӗкмӗш полк—Испани компартин ачийӗ—фашисла интервентсене хирӗҫ ҫапӑҫакан Испани халӑх ҫарӗн хурҫӑ никӗсӗ пулса тӑчӗ.

Выставкӑ полкӑн мухтавна чапланнӑ историйӗ ҫинчен документсемпе каласа парать. Ку выставкӑна вуншар пин ҫынсем Мадридра, унтан Парижре пӑхнӑ. Халӗ ӑна ССР Союз ӗҫҫыннисене парне пек йарса панӑ.

... Пысӑк фотоӳкерчӗк ҫинче пиллӗкмӗш полкри батаљйон командирӗ Чичарро савӑнса кулать. Вӑл Мадрида хӳтлесе ҫапӑҫура вилнӗ.

Акӑ Долорес Ибаррури (Пассионарийа)—полкӑн хисеплӗ командирӗ, акӑ паллӑ полководӗц, пиллӗкмӗш полк командирӗ, халӑх ҫарӗн пӗррӗмӗш бригадине организацилекенӗ, ӗлӗк батрак пулнӑскер Енрике Листер, Испанири коммунисла парти Тӗп комитечӗн секретарӗ Хозе Диас.

Пиллӗкмӗш полк пӑлхавҫӑсене тата фашисла захватчиксене хирӗҫ тухнӑ вӑрҫӑ вутӗнче ҫуралнӑ. Акӑ полкӑн ҫар вӗренӗвӗн пӗррӗмӗш занљатийӗ. Пиншер бойецсем тин ҫеҫ илнӗ винтовкӑсене аллисенче хавасланса чӑмӑртаҫҫӗ.

Полк тимлӗ политикӑлӑ пурнӑҫпа пурӑнать. Бойецсем—политзанљатисенче, куллен пулса пыракан лару-тӑрува сӳтсе-йаваҫҫӗ, кӗнекесем вулаҫҫӗ, стена хаҫачӗсем кӑлараҫҫӗ, граждӑнла халӑх хушшинче митингсем туса ирттереҫҫӗ.

Полкра 70 пин ҫынран 50 проценчӗ—коммунистсем, 80 проценчӗ—ҫамрӑксем.

Выставкӑна курма пынӑ ҫынсен куҫ умӗнче—Мадрида паттӑрӑн хӳтленин картинисем тухса тӑраҫҫӗ. Пиллӗкмӗш полк искусствӑ произведенисене фашисла варвӑрсенчен хӑтарать.

Пиллӗкмӗш полк бойецӗсем халӑх хӗрӳлӗн ӑсатнипе хӑйӗн маршӗ сассипе фронта тухса кайаҫҫӗ.

Пиллӗкмӗш полк тӑшмансем хушшинче агитацилӗ ӗҫе организацилет. Акӑ брошӳрӑсемпе листовкӑсен образецӗсем, вӗсене окопсен леш йенче салатнӑ. Акӑ: окопсене фашиссен выҫӑ салтакӗсем патне листовкӑ ҫыхнӑ кӑлбасӑ вӗҫсе пырать.

Пиллӗкмӗш полкӑн 13 чӑн-чӑн стена хаҫачӗ. Хӑш-пӗрисем йунпа тата пылчӑкпа вараланнӑ. Вӗсене окопсенче, ҫапӑҫура, вут айӗнче кӑларнӑ.

...Полкри чи лайӑх подразделени—хурҫӑ ротӑн йалавӗсемпе флагӗсем, полкӑн ҫапӑҫу йалавӗсем. Пиллӗкмӗш полкӑн трофейӗсем: Мароккӑ ҫарӗсен йалавӗ, Мароккӑ офицерӗн мундирӗ.

Выставкӑ вӗҫӗнче „хисеп хӑми“. Кунта хӑйӗн халӑхӗн телейӗпе ирӗкӗшӗн кӗрешсе вилнӗ паттӑрсен йачӗсем.

Выставкӑ Испани республикӗн ҫӗнтерӳлӗ ҫарӗн йӑвӑр та паттӑр ҫулне уҫӑн кӑтартса парать, вӑл ҫар вакӑ-вакӑ милици отрйачӗсенчен пуҫланса кайса йаланлӑх тӑракан халӑх ҫарӗ пулса тӑчӗ, вӑл ҫара халь ирӗклӗ командовани йертсе пырать, унӑн пӗрлӗхлӗ ирӗкӗмӗлӗ вӑл—ҫӗнтересси.

(ТАСС).

## ЙУТ ҪӖРШЫВСЕНЧЕ

### ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Ийулӗн 31-мӗшӗнче фашисла интервентсен чаҫӗсем, бомбӑсем пӑрахакан нумай самољотсем тата нумай танксем пулӑшнипе, Файонран ҫурҫӗр йенче (хӗвелтухӑҫ фрончӗ) республиканӗцсен позицийӗсем ҫине контратакӑ тума пуҫланӑ. Республикӑ ҫарӗсем фашиссем хӗснине хӗрӳлӗн чарса тӑраҫҫӗ, вӗсене пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ.

Файонран кӑнтӑр йенче республикӑ ҫарӗсем пӑлхавҫӑсемпе интервентсен хирӗҫ тӑрас хӑватне пӗтернӗ. Республиканӗцсен чаҫӗсем Гандесӑран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ йенне мала куҫса пыраҫҫӗ.

Республиканӗцсем ҫӳлеле перекен тупӑсен батарейинчен персе, фашисла интервентсен 3 бомбардировщикне персе антарнӑ. Пӑлхавҫӑсемпе интервентсен чаҫӗсенчен республиканӗцсен йенне нумай салтаксем тарса каҫҫӗ. Республиканӗцсем пулеметчиксен пӗр ротине пӗтӗмпех, хӗҫпӑшалӗсемпе вӑрҫӑ хатӗрӗсемпе пӗрле, туртса илнӗ.


Левант фронтӗнче сӑртлӑ позицисем ҫинче интервентсемшӗн кӗтмен ҫӗртен тапӑнса, республиканӗцсем фашиссене пысӑк сийен кӳнӗ тата тӗрлӗрен вӑрҫӑ хатӗрӗсем чылай туртса илнӗ.

(ТАСС).

### Катастрофӑ пулнӑ

Ҫак кунсенче Германире икӗ пысӑк катастрофӑ пулса иртнӗ. Мӳнхен ҫывӑхӗнчи хими савӑтӗнче темӗн сиксе сирпӗннӗ, предприйатине пысӑк сӑтӑр кӳнӗ. Виҫӗ рабочи йӑвӑр аманнӑ. Турингири кали кӑларакан вырӑнсенче те ҫавӑн пекех калама ҫук вӑйлӑн сиксе сирпӗннӗ. 11 рабочи пӗтнӗ.

(ТАСС).



КИТАЙРИ ВӐРҪӐ

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Китай ҫарӗн бойецӗсем фронта кайас умӗн.

(Сојуфото).

### Пӑлхавҫӑсен тылӗнче

Испани пӑлхавҫӑсем туртса илнӗ кӑнтӑрти хуласенчи пур госпиталљсем те фронтсенчен пӗрмайах килсе тӑракан аманнӑ ҫынсемпе тулса ларнӑ. Итали госпиталљӗ карапӗсем пӗрмайах Италийе аманнӑ салтаксем илсе кайса, унтан ҫӗнӗ салтаксем илсе килсе тӑраҫҫӗ. Йулашки уйӑхра пӗр Кадикс портне кӑна Итали салтакӗсене 20 пин ҫын ытла илсе пынӑ.

Пӑлхавҫӑсем туртса илнӗ Малагӑ хули пуш-пушах. Урамсенче офицерсем тата Итали салтакӗсем кӑна тӑла пулаҫҫӗ. „Апат-ҫимӗҫ пит сахал тивет. Тӑраниччен ҫиейменнипе начарланса вилекенсен шучӗ ӳссе пырать. Ӗҫсӗр тӑрса йуланисен шучӗ, чухӑнлӑх татти-сыпписӗр ӳссе пырать.

Пӗтӗм Малагӑ провинцинче Испани фашисӗсен уйрӑм группировкисем хушшинче тата пӑлхавҫӑсемпе интервентсем хушшинче хирӗҫӳсемпе тытӑҫусем сике-сике тухаҫҫӗ. Выранти влаҫсем ҫывӑх кунсенче Малагӑра пысӑк событисем пулма пултараҫҫӗ, тесе хӑраҫҫӗ.

Йулашки кунсенче Малагӑри, ҫавӑн пекех Кадиксри Итали гарнизонӗсене васкавлӑнах Испанин ҫурҫӗрти пайне ӑсатва, мӗншӗн тесен хӗвелтухӑҫ фрончӗпе Левант фронтӗнче интервентсене пит пысӑк сийен кӳнӗ.

(ТАСС).

### Германи Чехословакине хирӗҫ вӑрҫма хатӗрленет

Австрипе Чехословакин мӗн пур чикки тӑрӑх вӑрҫӑ тумали майсем хатӗрлес ӗҫ вӑйлӑн пырать. Германи правителстви укрепленисен ҫӗнӗ линине тӑвасси ҫинчен йышӑннӑ пирки, чикӗ ҫумӗнчи районсенчи 42 йала урӑх вырӑна куҫарма тытӑнаҫҫӗ. Фашисла правителствӑн решенийӗнчен хресченсем ҫав тери хӑраса ӳкнӗ.

(ТАСС).

### 8-мӗш революцилӗ-халӑх ҫарӗн ӗҫӗсем

Йапонӗцсен тылӗнче—Манчжурин шалти районӗсенче тата Жехе провинцинче—кӗрешсе, Китайӑн 8-мӗш революцилӗ-халӑх ҫарӗ хӑйӗн операцийӗсене анлӑн сарса пырать. Вӑл ҫарӑн уйрӑм чаҫӗсем Бейпина Жехе провинципе ҫыхӑнтарса тӑракан чукун ҫула татнӑ. Йулашки виҫӗ ӗне хушшинче вӑл ҫул тӑрӑх пуйӑссем пӗрре те ҫӳреймеҫҫӗ.

Саккӑрмӗш революцилӗ-халӑх ҫарӗн нумайӑн хисепленекен ҫарӗсем Манчжоу-Го территорийӗ ҫине кӗнӗ, унта вырӑнти хресченсене йапонӗцсене хирӗҫ кӗрешме организацилӗнӗ. 8-мӗш ҫар бойецӗсем йалантарулӑ ӗҫсем туса пынипе, Манчжоу-Гон Жехе провинцинче вырнаҫса тӑракан ҫарӗсен чаҫӗсем йапонӗцсене хирӗҫ восстани тума пуҫланӑ.

(ТАСС).

# „Вырма тухнă хыççăн 3—5 кунран авăн çапма тытăнмала... Вырнă тырра 10—15 кунран кайа хăвармасăр капана хывса çитермеле“

(ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановленирен).

## Ăмăртăва лайăх организациленĕ

ЕЛĔК, ийулĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Шурашри „Комбайн“ колхоз иртнĕ çултанпах „Çĕнĕ çул“ колхозпа социалисăмлă ăмăртса ĕçлет.

Çак колхозсенче тырпулсене пухса кĕртме график туса, кĕрхи тырăсене 6—7 кун хушшинче вырса пĕтерме палăртнă. Ийулĕн 20-мĕшĕнче ыраш вырма тухрĕç.

„Çĕнĕ çул“ колхозри Çтепанăва, Куликова, Никитина колхозницăсем кĕлте çыхнă çĕрте кулленхи ĕç нормине 170 процент таран тултарса пычĕç. Кунта кулÿтурăлă-массăлă ĕçе лайăх организациленĕ. Кăнтăрла каннă вăхăтра хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Кунтах радио та пур.

Колхоз кĕрхи тырăсене планпа пăхнинчен икĕ кун малтан вырса пĕтерсе, авăн çапас ĕçе тытăнчĕ.

Çавнашкалах „Комбайн“ колхоз та уйри тырпула пухса кĕртес ĕçре социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йанă. Иванов йулташ йертсе пыракан звено кашни кулленхи ĕç нормине 200 процент тултарса пычĕ. Иккĕмĕш звенори К. Кириллăвă кĕлте çыхнă çĕрте кулленхи ĕç нормине икĕ хут тултарса пырса, 4 кун хушшинче 18 ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕ.

„Комбайн“ колхозра агитацие пропагандă ĕçне лайăх организациленĕ. Кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче ЧАССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессин ĕçĕсемпе тĕплĕн паллашаççĕ.

Ăмăртакан икĕ колхозĕнче те государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене çак кунсенче парса татма тăрăшаççĕ.

В. Йефремăв.

## Тырă вырса пĕтернĕ

ЙЕЛЧĔК. Тăрмăш йалсоветĕнчи „Хĕрлĕ йалав“ колхоз тырпула уйран пуçтарса кĕме лайăх хатĕрленсе тухрĕ. Пур пек ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курчĕ. Колхозăн аслă уй-хирĕнче машинăсем пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕç.

Тырă вырма тухнă кунранах бригадăсенче ăмăртулă ĕç сарăлса кайнă. Жнейкăпа ĕçлекен О. Скворнов йулташ 5 гектар вырас вырăнне 12 гектар, А. Герасимăв йулташ 14 гектар таран вырчĕç. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра доверĕннăй пулса ĕçленĕ В. Коновалăвă йулташ кунне 650-шар кĕлте çыхнă, А. Иванова йулташ нормăна 170 проц. таран тултарса ĕçленĕ. П. Гордейĕв йулташ, нормăпа 30 сурат тума пăхнă пулсан, куллен 56 сурат таран тунă.

Ĕçре социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса ĕçленипе „Хĕрлĕ йалав“ колхоз членĕсем тырăсене 9 кун хушшинче пĕтĕмпех вырса пĕтерчĕç. Халĕ колхозра кĕлте кĕртес, авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсем пыраççĕ.

Ф. Н. Беляйĕв.

## Ĕç нормине 310 процент тултарат

Карачри (Куславкка р.) „III-мĕш Интернационал“ колхоз кăçал тырпулсене уйран кĕске срукра тата пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕме лайăх хатĕрленнипе тухрĕ. Тырă вырма тухсан малтанхи кунсенчех колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăмăртса, стаханăвла ĕçлесси анлăн сарăлса пычĕ. Колхоз членĕсем халиччен колхозра пулман ĕç тухăçлăхне кăтартрĕç.

П. Павлăвă колхозра чи паллă стаханăвкă шутланат. Пурте унпа танлашса ĕçлеме тăрăшаççĕ. Вăл çуракинче те стаханăвла ĕçленĕ. Сухаламали нормăна кулленех 150 процент таран тултарса пынă.

Тырă вырнă чух Павлăвă ĕç нормине куллен иртерсе тултарчĕ. Малтанхи кунсенче çурлапа вырмали нормăна 195—216 процент тултарса ĕçленĕ пулсан, халь вăл 310 процент тултарса пырат.

Павлăвă колхозницă тырă вырнă çĕрте стаханăвла çĕнтерÿ тунипе пур колхозниксем те савăнаççĕ, унăн опычĕпе ĕçлеме тăрăшаççĕ.

А. Петров.

## Государствăна тырă парса татнă колхозсем

▪▪ Нăрваш Шăхальти (Турхан р.) „Совет“ колхоз государствăна ыраш, сĕлĕ, пăрçа йышши культурăсене парса татрĕ. Халь колхозра авăн çапас ĕç хĕрÿллĕн пырат.

Д. Петровă.

▪▪ Вăрман Йенĕшри (Шăхасан р.) „Свобода“ колхоз ыраша ăнăçлăн вырса пĕтерчĕ. Ыраш вырассипе виççĕмĕш бригадă малти рете тухрĕ.

Хальхи вăхăтра бригадăсенче хĕрсех авăн çапаççĕ. Колхозри икĕ бригадă государствăна ыраш парса татрĕç.

Н. Михайлăв.

▪▪ Кив Шулханти (Вăрмар р.) „Смычка“ колхоз государствăна ыраш парса татрĕ. Пурĕ 75 центнер паха ыраш панă. Колхозниксемпе колхозницăсем халь пăрçа çулса, çапма тытăннă.

В. Григорйев.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи ийулĕн 26-мĕшĕнче çирĕплетнĕ.

ССР Союзĕн Госпланĕ çумĕнчи Халăх-хуçалăх учочĕн Тĕп Управленийĕ

# ПЕРЕПИÇ ЛИСТИ №

1939 çулхи Пĕтĕм Союзри халăх перепиçĕ

| Перепиç пайĕн № | Инструктăр участкин № | Шутлав участкин № | Квартăл № | Çурт вырăнĕсене кĕртнĕ списоксем тăрăх çуртăн сводкăллă вырăнĕ № |
| --- | --- | --- | --- | --- |
| | | | | |

Республикă, край, облăç ____ Округ ____ Район ____

Хулалă поселенисенчи адрĕс:

Хула поселенин йачĕ ____ Хула районĕ ____

____ Урам, переулăк, площăчĕ

Çурт № ____ хватер № ____

Йалти вырăнсенчи адрĕс:

Йалсовет ____ Халăх пурăнакан пунктăн

йачĕ (йал, аул, кишлак, хутор т. ыт.) ____

Урам, переулăк ____ çурт №

| | Хушамачĕ<br>Йачĕ, ашшĕ йачĕ | № | № | № | № |
| --- | --- | --- | --- | --- | --- |
| 1 | Çемйе пуçлăхне кам пулат (арăмĕ, ывăлĕ, амăшĕ, апăшĕ йăмăкĕ, ывăлĕн ывăлĕ т. ыт. те). | | | | |
| 2 | Кунта выхăтлăха йе йалан пурăнат? | | | | |
| 3 | Вăхăтлăха пурăнакан çинчен кăтартмала:<br>а) йалан пурăнакан вырăна.<br>б) йалан пурăнакан вырăнта мĕн чухлĕ вăхăт хушши пулман | | | | |
| 4 | Йалан кунта пурăнакан, анчах вăхăтлăха кайнă çын çинчен „вăхăтлăха кайнă“ тесе паллă тумала та мĕн чухлĕ вăхăт хушши пулманнине кăтартмала | | | | |
| 5 | Арçын, хĕрарăм | | | | |
| 6 | Çуралнăранпа миçе çул иртнĕ, çулталăкран кĕçĕн ачасене—миçе уйах иртнĕ? | çул \| уйăх | çул \| уйăх | çул \| уйăх | çул \| уйăх |
| 7 | Националÿнăç | | | | |
| 8 | Тăван чĕлхе | | | | |
| 9 | Мăшăрлă пурăнат-и? | | | | |
| 10 | Мĕнле государствă гражданинĕ? | | | | |
| 11 | Хут пĕлни:<br>а) мĕнле чĕлхепе те пулин вулат тата çырат йе вулăт çеç<br>б) хутла пĕртте пĕлмест | | | | |
| 12 | Вĕренекен çинчен кăтартмала:<br>а) вĕрентÿ заведенин, шкулăн йе курссен тулли йачĕ<br>б) хăш класра йе хăш курсра вĕренет (çулталăкран сахал вĕренмели курссем çинчен „кĕске сруклӑх“ тесе паллă тумала) | | | | |
| 13 | Вăтам йе аслă шкултан вĕренсе тухнă-и („вăтам“, „аслă“ тесе паллă тумала) | | | | |
| 14 | Хальхи вăхăтра мĕн ĕçпе пурăнат (службă) йе пурăнма средствă мĕнрен илет | | | | |
| 15 | Ĕçлекен вырăн (предприйати, колхоз, учреждени йачĕ) | | | | |
| 16 | Обшчĕствăлă хăш ушкăнри çын: рабочисен, служашчисен, колхозниксен, кооперациленнĕ кустарсен, хресчен-йединоличниксен, кооперацилĕмен кустарсен, ирĕклĕ профессилĕ çынсен, йе культ служителĕсен тата ĕççынни мар ушкăнран-и? | | | | |

## Халăх переписне хатĕрленеççĕ

ШĂХАСАН. Шăхасан районĕнчи халăх хуçалăхне шута илес тĕлĕшпе ĕçлекен тытăмра халăх переписне хатĕрлеме тытăннă.

Ийулĕн 10-мĕшпе 20-мĕшĕ хушшинче йалсоветсенчи хуçалăх кĕнекисене тĕрĕслесе тухнă. Хуçалăх перписне хатĕрленес тĕлĕшпе районри учреждениссенче ĕçлекен 5 уполномочĕннăй йалсоветсене кайса, Шĕкĕр, Маршу, Йамаш, Челкасси, Йенĕш тата ыт. йалсоветсенчи хуçалăх кĕнекисене тĕрĕслесе тухрĕç. Шĕкĕр йалсоветĕнче хуçалăх кĕнекин пур формисене те йĕркелĕ çырса пынă.

Дм. Иванов.

# Халăх переписне мĕнле иртермеле пулат

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, 1939 çулта пĕтĕм Совет Союзĕнче халăх перепиçе пулат. Халăх переписне мĕнле иртермеле пуласси çинчен „Правда“ корреспондентне ССРС Госпланĕ çумĕнчи Халăх хуçалăх учочĕн перепиç иртерекен пĕтĕм Союзри бÿро начальникĕ Д. Йа. Бозин йулташ çапла каласа панă:

— Халăхăн йышĕ тата составĕ çинчен тĕрĕс пĕлме, ăна пĕр-пĕр кун тата пĕр-пĕр сехет тĕлне шута илсе тухмала. Пулас переписре халăха 1939 çулхи йанварĕн 16-мĕшпе 17-мĕшĕ хушшинчи çĕрлехи 12 сехет тĕлне шута илмеле пулат. Ку вăл перепиç ĕçне çĕрле тавăçсине пĕлтермест. Перепиç тума йанварĕн 17-мĕшĕнче ирхине 8 сехетре пуçлаççĕ, вара вăл ĕç хуласенче 7 кун хушши (йанварĕн 23-мĕшĕччен) тата йалти вырăнсенче 10 кун хушши (йанварĕн 26-мĕшĕччен) пырат.

Перепиç чухне çав вăхăтра пур çынсене пурне те, вăхăтлăха пурăнма килнисене те, çырса тухмала. Тата вăхăтлăха ăçта та, пулин кайнисене те перепиç листи çине çыраççĕ. Вăхăтлăха пурăнма пĕр-пĕр çĕре килнисен тата вăхăтлăха пурăнма пĕр-пĕр çĕре кайнисен хисепĕ пĕтĕм Совет Союзĕпе илсен пĕр тан пулма кирлĕ, çавă вăл перепиç итогĕсене тĕрĕслесе пăхма пит кирлĕскер пулат.

Пулас переписре перепиç листисене малтанах çырса хумали йĕрке пулмаст. Йанварĕн 12-мĕшĕпе 16-мĕшĕ хушшинче счетчиксем хăйсен участкисем тăрăх çÿресе, пулас перепиç çинчен халăха пĕлтерсе хураççĕ. Перепиç листисене перепиç вальли палăртса хунă кунсенче çеç çыраççĕ. Халăха пурăнакан вырăнта,—вăхăтлăха пурăнакансене те кĕртсе,—ĕçленĕ çĕрте мар çыраççĕ.

Перепиç листине çырса хумали сведĕнисене счетчикĕн кашни çынран хăйĕнчен ыйтса пĕлмеле. Счетчик пирвайхи хут пынă чухне кам та пулин килте çук пулсан, вара счетчикĕн перепиç листинче килте çук çынăн хушаматне, йатне тата ашшĕ йатне çырса хумала, ытти çинчен тепĕр хут пырсассăн хăйĕнчен ыйтса пĕлмеле. Счетчик перепиç тумалли йулашки кунччченех кама та пулин тĕл пулаймасан, вара перепиç листине çемйе членĕсенчен йе кÿршĕсенчен ыйтса пĕлнĕ тата тĕрĕсленĕ сведĕнисене çырса хуни пулма пултарат.

Халăха тĕрĕссĕн шута илсе тухмала пултăр тесе, перепиç листисĕр пуçне, „контрольный бланк“ текенни пулат. Счетчик хăйĕн участкинче тепĕр участкăра çырăнмали çынна тĕл пулсан, унăн çав çынăн переписре пулни çинчен справкă пуррипе çуккине ыйтса пĕлмеле (çавăн пек справкăсене пĕр-пĕр çĕрте вăхăтлăха пурăнакансене пурне те параççĕ). Çавăн пек справкă çук пулсан, счетчик çав çын çинчен „контрольный бланк“ çырат. Малашне çав „контрольный бланксене“ вăл çын пурăнмала текен вырăнти материалсемпе тĕрĕслесе пăхаççĕ. Вăл çынна çав вырăнта çырнă пулсан, вара „контрольный бланка“ чĕрсе пăрахаççĕ.

Халăхăн хăшпĕр ушкăнĕсене çырса тухма уйăрăм йĕркесем йышăннă. Çапла пульницăсемпе санаторисенчи çынсене, ача çурчĕсен воспитанникĕсене çав учреждени-сен персоналĕ çырса тухат.

Иçетри Çурçĕрти районсенчи халăха 1939 çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче çырса тухаççĕ.

Перепиçе иртерме счетчиксем, контролёрсем тата ытти ĕçлекенсем 400 пин çынна йахăн кирлĕ пулаççĕ. Вăл работниксене тупса çирĕплетес ĕç августăн 1-мĕшĕнчен пуçланнă.

⁂

Пирĕн Чăваш республикĕнче перепиç листисем вырăсла тата чăвашла пулаççĕ. Епĕр ăна халь чăвашла пичетлесе кăларатпăр.

## Халăх переписне хатĕрленни

Совет Союзĕн хулисемпе районĕсенче Пĕтĕм Союзри халăх переписне иртермĕ кадрсем тупса çирĕплетес ĕç массăллăн пуçланса кайнă. Перепиç работникĕсене—счетчиксемпе инструктăрсене—районсенчи ĕçтăвкомсем тата районсенчи советсем çирĕплетеççĕ. Пурĕ 400 пин çынна йахăн çирĕплетмеле.

Августăн 14-мĕшĕнче Мускавра Пĕтĕм Союзри халăх переписĕнчи йертсе пыракан работниксем вальли курссем уçăлаççĕ. Вăл курссенче вĕренме 200 çынна чĕннĕ.

Счетчиксем тата инструктăрсем вальли вырăнсенче—республикăсен, облăçсен тата районсен центрĕсенче курссем организациленеççĕ.

(ТАСС).

# Ленин музейĕнче

Урайне сарнă сарлака та çутă коридор. Чÿречисем Истори музейĕн çурчĕ çине пăхакан хĕрĕнче зал алăкĕ çине

Зал III<br>1900—1903

тесе çырса хунă.

Мускавра В. И. Ленинăн Центрти музейĕнчи çак зала парти çуралса тухса ÿссе пынине кăтартса паракан документсемпе материалсем пухнă, вăл парти XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнченех ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчери рабочи йухăмĕн авангардĕнче тăрат, вăл партине Ленинпа Сталин пăхса ÿстерсе çирĕплетнĕ.

• •

Ссылкăран таврăннă хыççăн темиçе уйăхранах, 1900 çулта кĕркунне, вырăссен политикăлă хаçатне кăларас ĕçе йĕркелесе йарас тесе, В. И. Ленин йут çыршыва тухса кайат. Çĕршыври мĕн пур революцилĕ марксиссене пĕрлештермели, буржуалă теоретиксем вырăс социал-демократине хăйсен йеине сулăнтарассине пĕтерсе партилли хаçат çинчен Ленин хăй не Шушенскине ссылкă йанă чухнех пур йенчен те тĕплĕн шухăшласа пăхнă. Ссылкăран таврăннă чухне çул çинче Илйич çак ыйтупа Уфара, Псковра, Мускавра, Петербургра чылай канашлусем туса иртерет. Вăл литературă йарса памали адрĕссем çинчен, вăрттăн çыру çÿретмели шифрсем çинчен йулташĕсемпе каласса татăлат, рабочи класăн пĕрлĕхлĕ, чăн-чăн революцилĕ партийĕн пулмали пулас кĕрешÿ планне çÿтсе йанат.

1900 çулти декабĕрте „Искра“ хаçатăн пĕрремĕш номĕрĕ тухат. Музейре кантăк айĕнче лайăх сыхлanса усранакан пысăках мар хаçат листокĕ çине калама çук пысăккăн хумханса пăхатăн. Çак номĕрте, ун хыççăнхи ытти мĕн пур номĕрсем пекех, Ленинăн йертсе пыракан статйи малти вырăнта тăрат. Зала пынă çынсем вĕтĕ шрифтпа наборланă хаçата пăхаççĕ. Ленинăн „Насущные задачи нашего движения“ статйинчи строксене вулаççĕ.

„Искра“ хаçата йут çĕршывран вăрттăн майпа Российăна илсе килеççĕ, ăна вăрттăн ĕçлекен типографинче пичетлесе кăлараççĕ. Çтена çинче—Бакури вăрттăн ĕçлекен типографи çурчĕн ÿкерчĕкĕ, ăна И. В. Сталин хушнипе Ладо Кецховели тунă. Кецховели—„Искра“ хаçатăн чи паллă представителĕсенчен пĕри, Сталин йулташăн шанчăклă соратникĕ пулнă, вăл вырăссен политикăлă хаçатне çеç мар, тата кайран Кавказ лешĕнчи социал-демократсен хастарлă органне — „Брдзола“ („Борьба“) хаçатне кăларас ĕçе организациленĕ çĕрте тĕлĕнмеле хăйулăх кăтартат. „Брдзола“ хаçатра Сталин йулташ чи активлăн хутшăнса ĕçлет. III-мĕш залра „Брдзола“ хаçатăн 1901 çулти сентабĕрте грузин чĕлхипе тухнă пĕрремĕш номĕрĕн фотоÿкерчĕкне курма пулат.

Йатарласа тунă карта „Искра“ хаçатăн вырăнти организацийĕсем çĕршывра ăçта-ăçта пулнине, вăрттăн тухса тăнă литературă склачĕсене, хаçата ламран-лам ăсатса тăнă пунктсене кăтартса парат. Пушшар—„Искра“ хаçатăн 49-мĕш номĕр матрицне вырнаçтарнă, ăна вăрттăн ĕçлекен типографисенче усă курма Российăна вăрттăн илсе килнĕ. Залра шахмăт сĕтелĕ ларат, сĕтелте вăрттăн йешчĕк пур. Çав йешчĕкре вăрттăн алçырăвĕсемпе çырусем усранă (вăл сĕтеле В. И. Ленин планĕ тăрăх тунă), унтах çÿлĕк çакăнса тăрат, çÿлĕк ăшĕнче „Искра“ хаçатăн çÿхе листисене пытарса усранă.

Ленинла „Искра“ хаçата малта пыракан рабочисен нумай массисем пĕлсе тăнă. Хĕрÿлĕн йуратнине палăртса çырнă çырусем редакцине пит нумай пынă. Çавăн пек çырусенчен пĕриниче, Петербургри рабочи-ткачран илнĕ çырура çапла каланă:

„Епĕ „Искра“ хаçата нумай йулташсене кăтартрăм, пĕтĕм номĕр çĕткеленсе пĕтрĕ, а вăл хаклă... Унта пирĕн ĕç çинчен, вырăссен пĕтĕм ĕçĕ çинчен çырнă, вăл ĕçе пĕр пус укçисемпе хаклаймăн тата сехетсемпе палăртаймăн; ăна вулатăн та, жандармсемпе полици пирĕнтен, рабочисенчен, тата епĕр вĕсем хыççăн пыракан интеллигентсенчен мĕншĕн хăранине ăнланса илетĕн. Вĕсем, чăнах та, хуçа кăсйисемшĕн çеç мар, патшашăн та, хуçасемшĕн те, пуриншĕн те хăрушă. Паллах, епĕ простой рабочи тата епĕ вĕренмен те, анчах епĕ чăнлăх ăçтине туйатăп, рабочисене мĕн кирлине пĕлетĕп. Ĕçлекен халăх халь çăмăллăнах хыпса илме пултарат, айалта кăварланат те ĕнтĕ, хĕлхем çеç кирлĕ, вара пушар пулат. Ах, хĕлхемрен çулăм хыпса илĕ тесе йепле тĕрĕс каланă!“.

Çак çыру, „Искра“ хаçатăн 1901 çулти август уйăхĕнче тухнă 7-мĕш номĕрĕнче пичетлесе кăларнăскер, хаçат вулакан рабочисен ытти çырăвĕсем пекех, III-мĕш залри експонатсем хушшинче паллă вырăн йышăнса тăрат.

Пĕр витринă патĕнчех теприн патне пырса, рабочи класăн революцилĕ партине тăвассишĕн аслă Ленин мĕнле кĕрешнипе тĕплĕн паллашатăн. „Искра“ пулăшнипе уйрăмăн-уйрăмăн ĕçлесе тăнă социал-демократилĕ кружоксемпе ушкăнсем пĕр çĕре пĕрлешеççĕ, тĕрекленеççĕ, революцилĕ вăрттăнлăхра ĕçлекен чăн-чăн бойецсене пурне те хăйсен организацине пухаççĕ. Российăри рабочи йухăм ытларах та ытларах революциленсе пырат, вăл йухăм кунсеренех ÿсет. Çĕршывра хастарлă революцилĕ демонстрацисемпе стачкăсем пулса иртеççĕ. А. Кутателадзе художникĕн паллă картининчен ÿкерсе илнĕ фото 1902 çулта Сталин йулташ йертсе пынипе Батумири рабочисем демонстраци тунине кăтартнă.

Економиссен сийенлĕ влийанинчен хăйпăнса тухса, Российăри социал-демократилĕ рабочи партин вырăнти комитечĕсем пĕрин хыççăн тепри „Искра“ позицийĕсем çумне пĕрлешеççĕ. Витринă кантăкĕ айĕнче—„Искра“ номĕрĕ, унта Хĕвелтухăç Çĕпĕре ссылкăна йанă социал-демократсен ушкăнĕн çырăвне пичетленĕ. Вĕсем те Ленинăн „Что делать?“ кĕнекинче кăларса тăратнă революцилĕ марксисăм принципĕсене тата тактикăлла задачĕсене йышăнни тăрăх социал-демократине пĕрлештерессишĕн тăраççĕ.

II-мĕш сйеса пухма хатĕрленес ĕç хĕрÿлĕн пырат. В. И. Ленин „Искра“ редакцинче революцилĕ рабочи партин большевикла программишĕн тимлĕн кĕрешет. Музей курма пынă çынсем пурте сйессăн историлĕ документĕсен фото-ÿкерчĕкĕсем çине уйрăмах çаварăнса пăхаççĕ. Акă В. И. Ленин çырнă вырăс социал-демократин аграрлă программин страницисем, акă „Почему социал-демократия должна об'явить решительную и беспощадную войну социалистам-революционерам“ йатлă статйан алçырăвĕ. Кантăк айĕнче—парти уставĕн пройекчĕн страницисене, вĕренекен çамрăксем тĕлĕшпе мĕнле пулмали çинчен сйес йышăннă резолюци пройекчĕн страницисене ÿкерсе илнĕ фотосем. Сйес уçăлаччен икĕ кун малтан (1903 çулти ийулĕн 28-мĕшĕнче) тухнă „Искра“ хаçат номĕрĕ пысăккăн интереслентерет, унта В. И. Ленинăн „Национальный вопрос в нашей программе“ йатлă статйи пичетленнĕ.

Сйес ĕçленĕ кунсенчи документсене хумханулă туйăмпа вĕренетĕн. Графаланă пысăк хут листисем çине В. И. Ленин сйесра тухса каланисем пирки паллăсем тăват, пĕр-пĕр ыйтăва сÿтсе-йавнă май сикçе тухнă уйрăм шухăшсене çырса хурат. „Ответственность“ текен сăмах айне хут листи çинче виçç хутчен айалтан туртса паллă тунă. Ленин çырнă кашни документра партин рабочи клас умĕнчи ответлăхе çав тери пысăккине палăртса панă, çав рабочи клас революцилĕ марксисăмăн тăшманĕсемпе хăйарран кĕрешсе социалисăмлă обшчĕствă тумалла.

Рабочи клас большевиксем йертсе пынипе II-мĕш сйес хыççăн çывхарса килекен революцилĕ çапăçусене хатĕрленет. Большевикла парти, Ленин Сталин партийĕ йертсе пынипе рабочи клас буржуалă-демократилĕ революцин гегемонĕ (руководителĕ) пулса тăрат, унтан етемлĕх историнче çĕнĕ епохă уçса, социалисăмлă революцине вĕçлесе çитерет.

(ТАСС).

## Парти пурнӑҫӗ

# Райком инструкторӗ

Икӗ ҫул хушши ӗнтӗ Андрейӗв йулташ Йӗлчӗк райкомӗн инструкторӗ пулса ӗҫлет. Ҫак икӗ ҫул хушшинче вӑл инструкторӑн ӗҫӗн искусствине алла илнӗ. Вӑл кашни уйӑха валли ӗҫ планне тӑват, кулленхи ӗҫсене план тӑрӑх туса пырат. Тунӑ ӗҫсене вӑл дневник ҫине ҫыртсе, учота илсе пырат. Ку дневник ҫине вӑл парторгсемпе, агитаторсемпе, агитколлектив руководителӗсемпе инструктивлӑ канашлу тунисене, хӑш коммунис мӗнле ӗҫленине, хӑшпӗр йалсоветӗсен ӗҫӗн результачӗсене т. ыт. ҫырса пырат.

Унӑн участкинче 8 йалсовет, 17 колхоз. Кашни колхозрах агитколлектив организациленӗ, вӗсенче 98 агитатор. Тырпула пухса кӗрес умӗн политикӑлӑ агитаци ӗҫне мӗнле йӗркелесси ҫинчен кустсенче икӗ канашлу ирттернӗ. Андрейӗв йулташ агитаторсене кашнине пекех паллат, вӗсен ӗҫӗсене те пӗлсе тӑрат. Унӑн участкинче чи лайӑх агитколлектив Ҫӗнӗ Патрикел йалӗнче ӗҫлет. Унта 7 ҫын. Агитколлектива Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Смирнова йулташ йертсе пырат. Агитколлектив лайӑх ӗҫленипе йалта тӗрлӗ хуҫалӑх планӗсене пурнӑҫласси те ӑнӑҫлӑн пырат. Укҫа-тенкӗ пухас плана 100 процент тултарнӑ. Ҫӗнӗ займа 4 пин тенкӗлӗх сарнӑ. Кӗрхи тырпула планпа 5 кунта пуҫтарса кӗме палӑртнӑ пулсан, 3 кунта пуҫтарса кӗнӗ.

Колхоз бригадисенче йалӑнах ҫтена хаҫачӗсем тухса тӑраҫҫӗ. Агитаторсем хӑйсен ӗҫӗсене учота илсе пыраҫҫӗ.

Андрейӗв йулташ хӑйӗн 4-мӗш участокри коммунисӗсене пурне те пӗлет, вӗсем патне килӗ ҫӳресе, вӗсене мӗнле пулӑшу кирлине пӗлсе тӑрат, ӑнланман ыйтусене ӑнлантарат. Кашни коммуниса вӑл „Что требует партия от коммуниста“ йатлӑ кӗнеке парса вуласа тухма хушнӑ. Вӑл партире тӑман активпа та тӑрӑшса ӗҫлет, ӗҫре малта пыракансене парти уставӗпе программи ҫинчен ӑнлантарса, парти ретне ӳстерессишӗн тӑрӑшат. Парти членне кӗме Смирновӑна тата Пикулӑв йулташсене, парти кандидатне кӗме Илйинпа Сметанина пулӑшнӑ.

Андрейӗв йулташ хӑйӗн ӗҫне йуратса ӗҫлет, ҫавӑнпа та унӑн ӗҫӗсем ӑнса пыраҫҫӗ.

Унӑн ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем те пур, сӑмахран вӑл ӗҫлекен участокра йединоличниксем хушшинче агитаци ӗҫне ҫителӗклӗ йӗркелемен. Тата агитаторсемпе инструктивлӑ канашлусем тунисӗр пуҫне, вӗсемпе ҫеминарсем туман-ха.

И. Г. Кирӳшкин.

# Тӗрӗс йертсе пыни кирлӗ

КУСЛАВККА. Комбинатри рабочисемпе инженерлӑ-техниклӑ работниксем, 1937 ҫулхи ӗҫ итогӗсене пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн, кӑҫалхи ҫул лайӑх ӗҫлесе, промфинплана тултарса пыма обйазательствӑ илнӗччӗ. Кашни ҫын ҫав обйазательствӑна пурнӑҫласа пырсан, комбинат плана ытлашшипех тултармала. Анчах пайанхи куна ӗҫ начах ӳрӑхла тӑрат. Комбинат ултӑ уйӑх планне 69,2 процент ҫеҫ тултарнӑ (2741,1 пин тенкӗлӗх продукци туса кӑларас вырӑнне 1.897 пин тенкӗлӗх кӑна туса кӑларнӑ). Ҫавӑнпа пӗрлех тата вӑл 271 пин тенкӗ укҫа ытлашши расхутланӑ.

Комбинат начар ӗҫлени мӗнрен килет-ха? Чӑн малтанах дирекци тата партипе профсойуз организацисем пӗр-пӗринпе таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлеменнинчен, конкретлӑ йертсе пыманнинчен. Ҫавна пула ӗнтӗ чылай ӗҫсем йапӑхса кайнӑ. Техникӑна вӗренесси, ӗҫ вырӑнӗсене тӗрӗс организацилесси, дисциплинӑна йӗркелесси тата пурӑнмали условисене кирлӗ пек туса парасси—ҫаксене халӗ те сӳрӗккӗн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Ийуӊ тата ийуԓ уйӑхӗсенче комбината колхозсенчен, йалсенчен чылай ҫынсем ӗҫлеме килчӗҫ. Анчах техникӑна ним пӗлменскерсем труках станок ҫинче ӑҫтан ӗҫлеччӗр-ха? Анчах кунта ҫапла тӑваҫҫӗ: ӗҫлеме килнӗ—ӗҫле, хут те хӑш вырӑнта пултӑр. Ҫак йулашки икӗ уйӑх хушшинче ӗҫлеме килнӗ рабочисене пайанхи кун та техникӑна вӗрентме тытӑнман. Йавӑҫ касскалакан цехри сменӑ маҫтӑрӗ Илйин йулташ ҫеҫ 10 кунта пӗр хут занятти туса ирттерет.

Техникӑна алла ҫавӑрса илмен пирки, час-часах браксем пулаҫҫӗ, простойсем те сахал мар. Ирттнӗ ийуӊ уйӑхӗнче 913 кубла метр материала брака кӑларнӑ (вӑл 71.639 тенкӗ убыткӑ).

Ӗҫ вырӑнӗсене йӗркелеме пӗлменни те станоксене простой тутарат. Кирлӗ ҫӗрте подсобнӑй рабочисем ҫук, станочниксем материалсене хӑйсемех йӑтса пыраҫҫӗ.

— Вагонеткӑна станок патне илсе пыраччен 10—15 минут, унтан кирлӗ материал суртласа икӗ сехете йахӑн ирттеретӗн. Ҫавӑн пирки ӗнтӗ епӗр нормӑсене тултараймастпӑр,—тет типӗтекен цехра ӗҫлекен Сымокинӑ йулташ.

Пӗр ӗҫрен тепӗр ӗҫе куҫарнисем сахал мар. Акӑ, хӑма ҫуракан цехри Феклин йулташ бригадӑна ҫирӗплетсе, йӗркелесе ҫитерет кӑна, ӗҫ вӑйӗ ҫитмен пирки бригадӑна каллех салатса йарас патне ҫитереҫҫӗ, пӗрне—пӗр ӗҫе, теприне—тепӗр ҫӗре йараҫҫӗ.

Рабочисен пурнӑҫ условийӗ начар темеле мар. Хватерсем ҫителӗклӗ. Анчах хватерсенче таса мар, дисциплинӑ ҫукки пуҫ пулса тӑнӑ. Ку ӗнтӗ пӗтӗмпех ҫуртйӗр пайӗнче ӗҫлекенсенчен килет. Вӗсем йалӑнах хватер ҫукки ҫине йӑвантарма пӑхаҫҫӗ, пур хватерсенче йӗркелӗх, тасалӑх тӑвассишӗн тӑрӑшни курӑнмаст. „Халӗ хватер кирлех мар, кирек ӑҫта та тупма пулат“, тет комендант Мйасников йулташ.

Культмассӑлӑ ӗҫе кирлӗ пек туса пымаҫҫӗ. Комбинат клубӗнче ҫӑва тухнӑранпа уйрӑмӑнах ӗҫ йӑвашланчӗ. Клуб час-часах питӗрӗнчӗк тӑрат. Тӗрлӗрен кружоксем ӗҫлемеҫҫӗ, руководителсем сапаланса кайнӑ. Духовой оркестр руководителӗ Лозкин йулташ та сайра хутра кӑна занйатисем туса ирттерет. Клубра вечӗрсем, спектакльсем, лекцисем те пулмаҫҫӗ т. ыт. те.

Ҫапла ӗҫлесе пынӑран ӗнтӗ комбинат хӑйӗн планне ӑнӑҫлӑн тултараймаст. Комбинатри руководителсем социалисӑмлӑ ӑмӑртупа стахановла йухӑма йертсе пырассине пачах манӑҫа кӑларнӑ. Йанвар уйӑхӗнче комбинатра 291 стахановец пулнӑ пулсан, халӗ 220 ҫеҫ.

Комбинат лайӑх ӗҫлесе пыма пултарат, условисем пур. Йертсе пыракансен пӗр-пӗрин ҫине шанса лармасӑр, алла-аллӑн тытӑнса ӗҫлени, сатӑрҫӑсен йулашкийӗсене тӗппипех ҫапса хуҫса, пӗтӗм массӑна ӗҫе мобилизацилени, вӗсене йалан вӗрентсе, пулӑшса пыни ҫеҫ кирлӗ. Ҫакна тума, паллах, парти райкомӗн те пысӑк пулӑшу памала.

А. Мошков.

# Литературӑри ӳсӗмсемпе кӑлтӑксем

Чӑваш совет писателӗсен иккӗмӗш суйлав пухӑвӗ пулса иртнӗренпе пӗр ҫул ҫитрӗ. Ку вӑхӑтра питӗ хӗрӳ ӗҫсем пулни тата чӑваш совет литературине тӗрлӗ ирсӗр хура вӑйсенчен тасатни пирӗн халӑх литературин историне пысӑк саспаллисемпе ҫырӑнса йулӗҫ. Нумай ҫулсем хушши халӑх тӑшманӗсем—троцкиссем, бухаринӗцсем, буржуалӑ националиссем тата вӗсен хӳрешкисем литературӑра хӑйсен сӑтӑрла ӗҫӗсене туса пынӑ.

Ҫав тӑшмансем „чӑваш совет писателӗсем оригиналлӑ произведенисем ҫырма пултараймаҫҫӗ, ҫавӑнпа ӳрӑх чӗлхесенчен куҫармала“—тесе суйа елексем сарнӑ, чӑваш халӑхӗ талантсӑр, пысӑк культурӑ тума пултараймаст теме нимӑссӑр хӑйулӑх илнӗ, совет писателӗсен оригиналлӑ произведенисене тарӑхса тата пӑсса питӗтнӗ, хӑйсен тӑшманла тата пултарусӑр произведенийӗсене 25-шер пин екземплйар пичетлесе кӑларнӑ. Вӗсем ҫырман произведенисемшӗн темиҫешер пин тенкӗ укҫа илсе, государствӑна ҫаратнӑ. Халӑх хушшинчен тухнӑ талантлӑ йурӑстисемпе йумахҫӑсене ниме хумасӑр, литературӑ таврашӗнчен чышса йанӑ. 20 ҫул хушшинче йурӑстисемпе йумахҫӑсенчен пӗр ҫынна та совет писателӗсен йышне хутшӑнтарман.

Кашни ирсӗр ӗҫӗн шалчи тулатех. Халӑх хӑйӗн хушшинче сӑтӑр туса ашкӑнакан тӑшмансене ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Халӑх Ленинпа Сталин партийӗ йертсе пынипе йунлӑ вӑрҫӑсенче кӗрешсе илнӗ телейе фашиссен аллине сутма памарӗ. Социалисӑмлӑ обшчӗства хӗрӳлӗн ӳссе пырат, пирӗн тӑван ҫӗршыв ҫирӗп крепӑҫ пулса тӑчӗ, унӑн нумай чӗлхесемпе калаҫакан пӗр шухӑшлӑ халӑхсем пӗтӗм кӑкӑрӗсемпе тӑраҫҫӗ. Кун пек улӑпла халӑхсем етемлӗхӗн тивӗҫлӗхне хӳтӗлекен тӗлӗнмелле вӑйлӑ таса культурӑ тӑваҫҫӗ. Чӑваш халӑхӗ хӑйӗн социалисӑмлӑ культурине аталантарат. Чӑваш совет литератури, тӑшмансем вараланчӑк аллисемпе нумай сӑтӑр туса пынӑ пулсан та, 20 ҫул хушшинче халӑха вулама, вӗренме чылайах хаклӑ кӗнекесем пачӗ. Йулашки ҫулсене ҫеҫ илсен те, епӗр пысӑк ӳсӗмсем куратпӑр. Елкерӗн „Хӗнхур айӗнче“ поеми тата „Вӑрҫӑ кунӗсем“ романӗ, Оҫипӑвӑн „Айтар“ тата „Куллӗнхи симфони“ пйесисем т. ыт. те. Литературӑран тӑшманла руководствӑна сӑтӑрса тӑкнӑ хыҫҫӑн, вӑхӑтлӑха ҫырма пӑрахнӑ йулташсем ҫӗнӗрен ҫырма тытӑнчӗҫ, илемлӗ произведенисем пачӗҫ (Пайраш т. ыт.).

Хальхи вӑхӑтра епӗр хамӑр писателсен ӗречӗ хутшӑнса пынине куратпӑр. Кӑҫал ҫеҫ писателсен Сойузне 11 ҫынна члена тата кандидата илнӗ, районсенчен ҫӗнӗрен тухакан ҫамрӑксем ҫӗршерӗн. Тӑшмансем руководствӑра ларнӑ чух, ҫуллен „конкурс“ йатлӑ капайчӑклӑ йапаласем пулатчӗҫ, анчах вӗсенчен укҫа тӑкнисӗр пуҫне нимле пархатар та пулман. Кӑҫал икӗ конкурс пулчӗ. Вӗсем иккӗш те хӑйсен пахалӑхне кӑтартрӗҫ. Епӗр вӗсем тӑрӑх талантлӑ ҫамрӑксем ӳснине куртӑмӑр. Ҫак конкурссенче 39 писател хутшӑнна, вӗсенчен 8 ҫын чи малтан перо тытнӑ йулташсем (Медведӗв, Шашков, Филиппӑв т. ыт. те).

Сталинла Конституци —халӑхӑн ылттӑн кӗнеки. Вӑл пирӗн писателсен пултарулӑхне вӑй паракан ҫӑлкуҫӗ пулса тӑрат. Писателсем Конституцине кӑтартас пирки чылайах илемлӗ произведенисем пачӗҫ.

ССРС, РСФСР тата Чӑваш республик[…] Верховнӑй Совечӗсене суйланӑ чух, р[…] йонсенче, халӑх хушшинче депутатс[…] ҫинчен ҫырассине те, культурӑпа мас[…] ӗҫне те активлӑ хутшӑнчӗҫ. Ку ӗҫ пис[…] телсен пултарулӑхӗ малашне ҫӳлӗ пусӑ[…] хӑпарассине пӗлтерет. Писателсем хал[…] хӑн чи лайӑх ывӑлӗ-хӗрӗсемпе пӗрле т[…] са государствӑ ӗҫӗнче пулчӗҫ, патт[…] ҫынсемпе—депутатсемпе, вӗсен ӗҫӗсем[…] ҫывӑх паллашни малашне чӑн-чӑн лай[…] кӗнекесем ҫырма пуйан материал пулч[…]

Анчах ӗҫре кӑлтӑксем сахал мар. […] Чӑвашгиз писателсен произведенисе[…] калама ҫук йӳнӗ хак тӳлет. Чӑваш[…] директорӗ Васильӗв й. шухӑшӗпе чӑв[…] писателӗсем ҫырнӑ оригиналлӑ произ[…] денисем питех кирлӗ мар иккен, выр[…] ларан куҫарса чӑваш литератури „ту[…] пулат имӗш. Шулашкар хула совечӗ […] ҫавнашкалах писателсене ҫителӗклӗ […] ловисем туса парас ӗҫе хакламаст.

Уйрӑмӑнах литературӑ продукцине ҫ[…] та кӑларассинче пысӑк чӑрмавсем пул[…] ҫӗ. Чӑвашгиз литературӑ продукцине […] хатра кӑларас пирки вӑраххӑн сетӗрӗн[…] пырат. Кӗнекесем типографисенче икш[…] ҫул тухаймасӑр выртаҫҫӗ. Литератур[…] журналӗ „Сунтал“ нихҫан та вӑхӑт[…] тухса пыраймаст. Николай Островск[…] „Хурҫӑ йепле хӗрнӗ“ романне пӗлт[…] ийуӊ уйӑхӗнче производствӑна йан[…] анчах халӗ те тухман, хӑҫан тухасси […] паллӑ мар.

Ача-пӑча литератури ҫинчен нумай к[…] лаҫнӑ та, пӗрмайах манса пынӑ. Чӑва[…] гиз таврашӗнче ача-пӑча писателӗ те[…] кулӑшла илтӗнет, ӑна унта нимле хис[…] те ҫук. Оригиналлӑ ача-пӑча литерату[…] тӑвасси—куҫ умӗнче тӑракан пысӑк […] мӗлйунла чӑваш халӑхӗн ачисене, ҫамр[…] ӑрӑва кӗнекесӗр хӑварма йурамаст. Пӗ[…] тӗр Чӑвашгиз 4 оригиналлӑ кӗнеке, кӑҫ[…] мӗн пурӗ те 2 кӗнеке кӑларнӑ. Ку п[…] фӑрсем Чӑвашгиз мӗнле ӗҫленине кӑтар[…] ҫа параҫҫӗ.

Литературӑ тӗрӗс-тӗкӗллӗ, уҫӑ сывлӑ[…] па ӳстӗр тесен, ӑслӑ та пысӑк туйӑм[…] критикӑ кирлӗ. Тӑшмансем вӑл фронт[…] хуҫа пек ларнӑ чух, критикӑ тени пис[…] телсене ҫапса антаракан чукмар пек т[…] йанатчӗ, пултарулӑх ӗҫне дезорганизац[…] лӗх кӳртетчӗ. Литературӑра критикӑ ти[…] кӗрме тивӗҫлӗ пысӑк произведенис[…] ҫук мар. Пирӗн хальхи вӑхӑтра крити[…] ытла та начар. Вӑл политикӑ йенчен ша[…] сӑр, нумай чухне пысӑк ҫитменлӗхсе[…] курмасӑр, пӗчӗк ҫитменлӗхсем ҫинчен ҫ[…] ҫыраҫҫӗ. Малашне критикӑна культурӑ[…] тата теори йенчен ӑҫта тӑвас тесен, […] нӗ кадрсем ӳстерни, вӗсене вӗренти[…] кирлӗ.

Тӳрех калас пулат, литературӑна ҫа[…] рӑк вӑйсене кӳртес пирки ӗҫ питӗ н[…] чар пырат. Журналсен редакцисенче т[…] та Чӑвашгизра купи-купипе ҫырма пу[…] лакансен произведенийӗсем выртаҫҫӗ, в[…] сене вӑхӑтра ответ пани ҫук. Чӑвашгі[…] консультаци ӗҫне халӗ те йӗркелеме[…] Ответ панӑ чухне те „санӑн произвед[…] ни пичете каймаст“ тесе стандартлӑ ҫ[…] русем йараҫҫӗ. Малашне консультаци ӗ[…] не пултарулӑ ҫынсене лартмала. Ҫамрӑ[…] сенче—пирӗн малашлӑх.

Литературӑ — халӑх чунӗ. Халӑх ч[…] нӗ сарлака та аслӑ. Литературӑ тӑвасс[…] —пирӗн пурнӑҫ, пирӗн ӗҫ.

УХСАЙ ЙАККӐВӖ.

## Йӑла тӗлӗшӗнчен пӑсӑлнӑ Ҫимаков

ПСҪЛКС Тутаркас райкомӗн ҫекретарӗн заместителӗ М. Ҫимаков райком бӳровӗсенче, пленумӗсенче, пухусенче „сисӗмлӗхе“ вӑйлатмала... йӑла тӗлӗшӗнчен пӑсӑлса кайнӑ етемӗсенчен тасалмала,—тесе сахал мар калаҫат.

Ҫак сӑмахсене райком ҫекретарӗн заместителӗ Ҫимаков мӗнле пурнӑҫлат-ха? Вӑл комсомол райкомӗ ҫумӗнчи комсомол комитечӗн ҫекретарӗ. Ҫимакова темиҫе хутчен те критиклесе лайӑхланма хушнӑ. Вӑл йертсе пыракан организацинче 13 комсомолӗц. Ҫак комсомолӗцсемпе нимӗнле ӗҫ тунине те курма ҫук. Ҫур ҫул ӗнтӗ комсомолӗцсен пухӑвӗ пулман. Ҫимаков пур ыйтусене те бӳрорах сӳтсе йаватпӑр,—тесе комсомолӗцсемпе пухура пӗр ыйту сӳтсе-йавма та шутламаст.

Ҫимаков йертсе пыракан Илйинкӑри политвӗренӳ кружокӗнче 2 занятти кӑна ирттернӗ, кружок ӗҫӗ тахҫанах сӳнсе ларнӑ. Ҫимаков ӗҫкӗ-ҫикӗпе аташкалас йӑлана нийепле те пӑрахаймаст.

Ийулӗн 11-мӗшӗнче, Пушкӑрта кайатӑп тесе тухса, Турайа петрав кунне ирттерме кайнӑ. Петрӑвра (ийулӗн 12-мӗшӗнче) намӑса пӗлмесӗр ӗҫсе, райком велоҫипедне ҫӗмӗрсе пӗтернӗ. Вӑл комсомол райкомӗнче те начар ӗҫлет.

М. Исайӗв.

## Начар ӗҫлеме сӑлтав ҫук

Ҫӗмӗрлери комбинат кӑҫал малтанхи ҫурҫул хушшинчи плана 91,6 процент ҫеҫ тултарнӑ. Ҫапла комбинат государствӑна 546.283 тенкӗлӗх продукци параймарӗ. Комбинатӑн производствӑ планне тултарасси столйарнӑй тата мебельнӑй цехсенчен нумай килет. Анчах вӑл цехсем начар ӗҫлеҫҫӗ. Столйарнӑй цех ҫурҫулти плана 93, 2 процент, гнутарнӑй цех 99,2 процент ҫеҫ тултарнӑ. Столйарнӑй цехпа гнутарнӑй цех туса кӑларнӑ продукци пахалӑхӗ те начар. Иртнӗ ҫулта пӗтӗм продукци хисепӗнче пӗрремӗш сортлӑ продукци 60—65 процент пулнӑ пулсан, кӑҫал 20—25 процент ҫеҫ шутланат.

Комбинат руководителӗсем начар ӗҫлени чӗрӗ таварсем ҫителӗклӗ пулманнинчен килнӗ, теҫҫӗ. Ку тӗрӗс мар. Иккӗмӗш кварталта чӗрӗ таварсем ҫителӗклӗ пулнӑ. Анчах плана пурӗ-пӗрех тултарман, 94,6 процент ҫеҫ тунӑ. Апла пулсан, ӗҫ чӗрӗ таварсем ҫитменнинче мар. План тулманни пуринчен ытла комбинат тата цехсен руководителӗсем ҫавӑрӑнусӑр ӗҫлениндчен, стахановла йухӑм ҫине тимлӗн пӑхманнинчен килет.

Нормӑсене ытлашшипех тултарса ӗҫлекен рабочисем комбинатра сахал мар. Вӗсен опычӗсемпе ытти рабочисене паллаштаракан, стахановӗцсен шутне татах ӳстерессишӗн тӑрӑшакан ҫук. Ҫавӑнпа стахановӗцсен шучӗ ӳсмест.

Икӗ ҫул хушшинче сушильнӑй цехпа чӗрӗ таварсен складне йусасси пирки темиҫе решени йышӑннӑ. Анчах ку таранччен йусав ӗҫне тытӑнман. Чӗрӗ таварсен складӗнче ҫутӑ ҫителӗксӗр, сушильнӑй цехӑн ҫтенисем кӗҫ-вӗҫ ишӗлсе анас пек тӑраҫҫӗ. Ӗҫ вӑйне йалан лӑхах ҫирӗплетес йенӗпе те палӑрмалӑх ӗҫсем туман-ха. Ӗҫ вӑйӗ йухӑнса тӑни халӗ те пысӑк. Икӗ квартал хушшинче ӗҫлеме мӗн пурӗ 1063 ҫын илнӗ, 976 ҫын тухса кайнӑ. Нумайӗшӗсем хватер ҫук пирки тухса кайаҫҫӗ. Мӗншӗн тесен коммуналлӑ ҫуртйӗр пайӗ (начальникӗ Сухарӗв) рабочисене пурӑнма кирлӗ пек условисем туса парассишӗн тӑрӑшмаст.

А. Платонӑв.

## Красноармейӗцсем партине кӗреҫҫӗ

Н авиачаҫре чӑваш красноармейӗцсем чылай. Красноармейӗцсем вӗренӳре те ытти обшчӗствӑлӑ ӗҫсенче те малта пыраҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫар пур ҫамрӑксемшӗн те пысӑк, ҫынна тӳрӗ ҫул кӑтартса паракан шкул пулса тӑрат. Унта ҫамрӑксем пӗлӳ тӗлӗшӗнчен ӳсеҫҫӗ.

Вӗсем хамӑрӑн телейлӗ социалисӑмлӑ ҫӗршыва сыхлас ӗҫе пӗтӗм вӑйа хурса вӗренеҫҫӗ. Вӗсем правительствӑна, ленинла-сталинла партин ӗҫне чунтан парӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Парти, комсомол речӗсене кӗреҫҫӗ. 1937 ҫулта кӗркунне Хӗрлӗ Ҫар ретне килсе кӗҫӗн командирсем пулнӑ Капитонӑв Артемий, Павлӑв С., Шчепетӑв йулташсем парти кандидатне кӗчӗҫ. Халӗ Матвейӗв А., Йегорӑв Г., Олгашӑв Илйа парти членӗн кандидатне кӗме рекомендацисем хатӗрлесе ҫитерни.

Ф. Андрейӗв.

## Пысӑк тухӑҫпа

Канаш хулинчи чӑх-чӗп комбинатӗнче стахановӗцсен хисепӗ ӳссех пырат. Рабочи-стахановӗцсем пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Алексейӗв йулташ нормӑна йалӑнах 165 процент, Соловйов 150 процент, Прохӑрӑв 147 процент, Матвейӗва 129 процент тултарса пыраҫҫӗ. Стахановӗцсем тӑрӑшнипе комбинат ҫулталӑкри ҫамарта хатӗрлес[…] плана 75 процент тултарчӗ те ӗнтӗ[…]

Комбинат дирекцийӗ стахановӗц[…] сене 10 ҫынна канмали ҫуртсене[…] 2 ҫынна санаторине кайма путӳов[…] кӑсем панӑ.

П. Кириллӑв.

## Йубилей тӗлне

Ҫӗмӗрлери комсомолӗцсемпе комсомолкӑсем тата сойузра мар ҫамрӑксем Ленинла-Сталинла комсомол 20 ҫул тултарнӑ тӗле производствӑра пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлесе кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ.

Нумайах пулмаст столйарнӑй цехри ҫамрӑксем пуху туса ирттерчӗҫ. Пухура пурте пӗр сасӑпах йубилей кунӗ тӗлне ӗҫ тухӑҫлӑхӗн палӑхне ӳстерсе пырса, производствӑ планне 120 проц. кайа мар тултарма, культурӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе те ҫӳлӗ вырӑна лартма йышӑнчӗҫ.

Комсомолӗц Малайӗв ҫак аслӑ праҫник тӗлне производствӑ планне 150 процентран кайа мар тултарма сӑмах пачӗ.

С. Н. Ухин.

# Чӑваш орфографийӗ пирки

1933 ҫулта ҫирӗплетнӗ „Чӑвашла тӗрӗс ҫырмалли ҫӗнӗ правилӑсенӗн“ чӑн пысӑк ҫитменлӗхӗ вӑл—урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсене ҫырассинче. Правилӑсене тӑвакансем, буржуалӑ националиссем, вырӑс сӑмахӗсенчен вутран хӑранӑ пек хӑранӑ. Вӗсем вырӑс сӑмахӗсем, тата интернационаллӑ сӑмахсем чӑваш чӗлхине кӗнипе нимӗнле те килӗшме пултарайман, ҫавӑнпа нимӗн тума аптӑранипе вырӑс сӑмахӗсене тӗрлӗ майпа пӑсма тӑрӑшнӑ. Хӑйсен теорине вӑйлатма вӗсем тӗрлӗ майсем шыранӑ. Пуринчен ытла фонетикӑ принципӗ ҫине тайӑннӑ. Ку фонетикӑ принципӗ вырӑс чӗлхин морфологи принципне хирӗҫ-хирӗҫ тӑрат. Вӑл принципа тӗппипех тытса пырсан, вырӑс сӑмахӗсен кӗлеткине те йӳдмала мар. Чӑнахах, вырӑс чӗлхипе кӗрешме буржуалӑ националиссем лайӑх май тупнӑ. Вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ сӑмахсене паллаймин пӑсса, вӗсем чӑваш ачисене вырӑс чӗлхине вӗренме чӑрмантарнӑ, чӑваш чӗлхине ӳсме, сарӑлма паман.

Урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсене ҫырасси вӑл ҫӗнӗ ыйту мар, тата пирӗн чӑваш чӗлхинчи ыйту ҫеҫ мар, Сойузри пур халӑхсен ыйтӑвӗ. 1895 ҫулта вырӑссен авторитетлӑ чӗлхе ӑсти академик Йа. Гротт хӑйӗн „Русское правописание“ йатлӑ кӗнекинче IV-мӗш уйрӑмне „Правописание заимствованных слов“ тесе пуҫлат. Кунта вӑл ҫакӑн пек ҫырат: „Мы часто бываем лишены возможности написать имя иностранного происхождения так, чтобы можно было угадать его подлинную форму, и для ясности принуждены присоединять ее в скобках. Поэтому мы должны пользоваться всеми средствами нашей азбуки, чтобы с возможной верностью передавать форму иностранных собственных имен, разумеется, кроме тех, которые в установившемся виде получили уже в языке право гражданства“. Ҫапла вара акад. Гротт вырӑс чӗлхинче урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсене тӗрӗс ҫырассине ҫул уҫса парат. Вӑл калани пиренишӗн пахха вырӑн йышӑнса тӑмалла. Пирӗншӗн вырӑс чӗлхи йут чӗлхе мар. Вырӑс чӗлхи урлӑ епӗр пӗтӗм тӗнчери культурӑпа, социалисӑм стройителствипе, пулас коммунисӑмпа пӗрлешетпӗр. Вырӑс чӗлхи пире Сойузри пур халӑхсемпе пӗрлештерет, вӗсемпе пӗрле социалисӑм тума пулӑшат. Ҫавӑнпа епӗр вырӑс чӗлхине тӑрӑшса вӗренетпӗр. Вырӑс чӗлхине ытти чӗлхесенчен (францусла, нимӗҫ, акӑлчан, тата ыттисенчен те) кӗрекен сӑмахсене пӑсма хушмаҫҫӗ пулсан, мӗнле пирӗн хамӑра тӑван, ҫывӑх чӗлхерен кӗрекен сӑмахсене пӑсмалла вара? Мӗншӗн-ха „опыт“ тесе ҫырас, вырӑнне „опат“ тесе ҫырас, „Гоголь“ вырӑнне „Гогӑл“ тесе пӑсас (отряд-отрйад, власть-влас, Рязань-Рйазань, калькулятор-калкулатӑр т. ыт. те)? Ку кирлӗ мар йапала, ку чӗлхе принципӗсене хирӗҫ кайни пулат. Епӗр чӗлхесене уйӑрса пӑрасшӑн мар, вӗсене пӗрлештересшӗн тӑрӑшатпӑр, епӗр халӑхсен интернационаллӑ чӗлхе патне йертсе пыратпӑр, ҫапла вара пирӗн интернационаллӑ сӑмахсенчен пӑрӑнмалли ҫук, вӗсене ҫаплипех ҫырни, „чӑвашлатманни“ кирлӗ сӗнӳ пулса тӑрат. Халӗ ӗнтӗ пирӗн алфавитра пур саспалли те пур, вӗсем пире урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсене пӗр пӑсмасӑр, тӗрӗс ҫырма пулӑшаҫҫӗ. Ҫавна астуса „Чӑваш орфографин тӗп правилисен“ пройектне тунӑ. Вӑл пройект тӑрӑх пирӗн урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсем улшӑнмалла мар, ҫаплипех ҫырӑнмалла. Вырӑсӗн паллӑ ҫыруҫи акад. Гротт сӗннине пирӗн пурнӑҫа тӗппипех кӳртме май килет. Пирӗн чӗлхе революцинчен чухӑн пулнӑ. Аслӑ Октйабӗр революцийӗ ӑна пуйанланма ҫул уҫса пачӗ. Пирӗн чӗлхене ҫултан-ҫул, кунран кун ҫӗнӗ интернационаллӑ сӑмахсем кӗрсе пыраҫҫӗ. Культурӑлӑх ӳснипе епӗр вӑл сӑмахсене пӑсмаствӑр, ҫаплипех калама вӗренетпӗр: ӗлӗкхи пек „хветератси“ теместпӗр, „федерация“ тетпӗр, „акрунум“ теместпӗр—„агроном“ тетпӗр. Чӑваш алфавитне вырӑс саспаллисене кӳртни—чӑннипех чӑваш чӗлхин пысӑк утӑмӗ. Вӑл утӑм чӑваш чӗлхине тата малала ӳсме май парат.

Халӗ ӗнтӗ ҫӗнӗ орфографи пройектне пӑхса тухар. Кунта хӑш параграфсенче малтан панӑ принципа хирӗҫ пынӑ пек вырӑнсем пур. Акӑ ия, ие, ий вӗҫсемпе пӗтекен сӑмахсене илер. Кунта икӗ тӗслӗ правилӑ пулса тӑрат: пӗри йулашки и е саспаллисене йатмӑр падежӗнче кӑларса пӑрахма хушат (академия, академии, академипе т. ыт. те); теприи вӑл и саспаллине хӑварма хушат (Россия, Россиьна, Россиьнпа, илея, идеяна, идеяпа т. ыт. те). Мӗншӗн-ха кунта пӗр пек мар? Акӑ мӗншӗн: чӗлхе ударени хыҫҫӑн нумай уҫӑ сасӑ тӑнине йуратмаст, ҫавӑнпа вӑл уҫӑ сасӑсене кӑларса пӑрахма тӑрӑшат. Академия сӑмахра пирӗн ударенине е ҫинче, ун хыҫҫӑн икӗ сасӑ (и, я), „академийӗсенче“ тесен, ударени хыҫҫӑн 4 уҫӑ сасӑ пулса тӑрат. „Россия“ сӑмахра ударени хыҫҫӑн пӗр уҫӑ сасӑ анчах, ҫавӑнпа „Россияна“ тесен, чӗлхе пӗртте аптӑрамаст, вӑл сӑмахӑ, ударени хыҫҫӑн тӑракан уҫӑ сасӑсене ҫӑмӑл калат. Акӑ мӗншӗн пирӗн пӗр пек сӑмахсенех икӗ правилӑ пулса тӑрат. Йат падежӗнче пирӗн ия, ие, ий вӗҫсемпе пӗтекен сӑмахсене кӗскетме те йурат пулӗ те, анчах епӗр сӑмахӑн пуҫламӗш формине пӑсас мар тесе, ҫаплипех хӑварсан лайӑхрах пулӗ тесе шухӑшлатпӑр. Ҫавӑн пекех е сасӑсемпе пӗтекен сӑмахсене те пӑсасшӑн мар епӗр. Пирӗн принцип тӑрӑх а е пе пӗтекен сӑмахсене кӗскетмелле. Кунта а, е—вӗҫ (окончание), пирӗн чӑваш чӗлхин йат падежӗнче вӗҫ тапраш пулмаст, ҫавӑнпа вырӑс чӗлхинчен куҫакан вӗҫсем сӑмах тӗпӗпе пӗрле куҫаҫҫӗ. „Сцена“ сӑмахран а вӗҫе кӑларса пӑрахсан, вара „сцен“ тӗп пулса йулат; ытти падежсенче „сцена“, „сценпа“, „сценра“, „сценран“, „сценсем“ т. ыт. те формӑсем пулса тӑраҫҫӗ. Ку формӑсене калама та ӑнӑр, ҫырма та илемлӗ мар, ҫавӑнпа кунта ҫавӑн пек сӑмахсен тӗпне анчах мар, вӗсене тӗпӗ ҫумне хушсан чӗлкешӗн лайӑх пулмала тесе шухӑшлатпӑр. Вӑл а па е вырӑнне ӑ, ӗ ҫырсан, татах пирӗн принципа хирӗҫ пулат, вӑл сӑмах тӗпне пӑсат.

„Власть“, „область“ йеврӗлӗ сӑмахсене вырӑссем те ҫаплипех каламаҫҫӗ. Ку сӑмахсем вӗсен чӗлхинче пирӗн чӑвашли пек „влаҫ“, „облаҫ“ пек илтӗнет. Анчах ҫыру чӗлхине калаҫу чӗлхипе пӑтраштарас пулмаст. Кун пирки вырӑссен паллӑ чӗлхе ӑсти проф. Д. Н. Ушаков ҫапла калат: „Отсутствие точности в передаче буквами звуков в обычном письме вовсе не является безусловным недостатком, так как для практических целей, которым служит письмо, точность вовсе не обязательна; наоборот, неточное звуковое письмо может быть проще и легче. Пользуясь меткими выражениями ученых, высказавшихся о правописании, можно сказать, что „цель правописания—ясное начертание образованного языка простейшими средствами“ (Раумер); поэтому практическое письмо является „общедоступной передачей звуков“ (Корш) и „относится к речи, как грубый эскиз к тщательно нарисованной картине“ (Пауль); как устная речь символически изображает мысли, так письмо символически устную речь“ (Томсон)“.

Ҫапла вара фонетикӑ принципӗ ҫине тайӑнакан ҫынсем вӑл принципа вӗҫне ҫитиччен пӗрех тытса пыма пултараймаҫҫӗ. Мӗншӗн епӗр урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсене пӑсмасӑр ҫаплипех ҫырма сӗнетпӗр? Мӗншӗн тесен, епӗр сӗнекен правилӑсем ҫыракан ӗҫне ҫӑмӑллатаҫҫӗ: пӗр сӑмахах икӗ тӗслӗ ҫыриччен пӗр тӗслӗ ҫыриччен ӑнӑртарах. Кӑна пурте ӑнланаҫҫӗ пулмала.

Тата пичетре тапратнӑ тепӗр шухӑш ҫинчен пӗр-ик сӑмах калас килет. Хӑшӗ-хӑшӗ ҫӗнӗрен кӳртнӗ саспаллисемпе чӑваш сӑмахӗсенче те уҫӑ курмала теҫҫӗ: „йупа“ вырӑнне „юба“ тесе ҫырмала, теҫҫӗ[…] Ку шухӑш тӗрӗс те пулӗ те, анча[…] ӑна пурнӑҫа кӳртме пит те йӑвӑр[…] тарах пулмала. Вара пирӗн пӗ[…] вӑхӑта пӗтӗм чӑваш халӑхне ху[…] пӗлмен туса хумала, тата ку ӗҫ[…] тума питӗ нумай укҫа-тенкӗ пӗ[…] термеле пулат, унтан — ку ӗ[…] ҫӑмӑл ӗҫ мар, ӑна пӗр ерне[…] пӗр уйӑх, ҫӳл хушшинче туса пӗ[…] терес ҫук. Унтан тата чӑваш хал[…] масси ун пек ҫӗнӗлӗхе мӗнле й[…] шӑнӗ? Халӑх хушшинче традици[…] сем пулаҫҫӗ. Сийенлӗ пулсан, епӗ[…] вӑл традицисене тӗппипех пӗтерет[…] пӗр. Анчах чӑваш ҫырулӑх тради[…] цийӗ сийенлӗ-ши пирӗншӗн? Пирӗ[…] шухӑшпа сийенлӗ мар. Ҫавӑнп[…] кун ҫинчен тӗплӗн шухӑшласа п[…] хас пулат. Хӑшӗ-хӑшӗ чӑваш ал[…] фавитӗнче саспаллисем нумайӑн[…] чен хӑраса ӳкнӗ, ҫавӑнпа хӑшне[…] пӗрне пӗтерсен те йурамала, теҫҫӗ[…] Саспалли нумайӑн вӑл никама т[…] чармаст, вӗренес ӗҫе те йӑвӑрлат[…] маст. […] саспаллисене епӗр л[…] и, т саспаллисенчен уйӑрмастпӑр[…] вӗсем ҫав саспаллисемех: ҫавӑнпа[…] ачасем пуҫласа вӗренӗ чух ку сас[…] паллисене часах ӑнланса илеҫҫӗ[…] Ку саспаллисене пӗтерсен нимӗнле[…] ҫӑмӑллӑх та пулас ҫук, йӑвӑрлӑх[…] сем хушӑнӗҫ: „ывӑх“ йеврӗлӗ[…] сӑмахсене епӗр ҫырма аптӑрӑпӑр[…] Пирӗн алфавитра анчах-мар, ытти[…] алфавитсенче те нумай саспалли[…] Ку „ытлашши“ саспаллисемпе епӗр[…] нумайах уҫӑ курмастпӑр, ҫавӑнпа[…] та вӗсем ҫырура пире час-часах[…] чӑрмантармаҫҫӗ: ль, нь, ть майпа[…] ҫырни вӑл ҫырӑва ҫӑмӑллатни мар[…] йӑвӑрлатни пулат.

Н. Резӳков.

# Йапăх директăрсем

Телейлĕ çĕршывра çитĕнекен çамрăк ăруран социализм строительстви валли Ленин—Сталин ĕçĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлекен граждансем хатĕрлес ответлă та чыслă ĕçе партипе правительства совет шкулĕпе совет учителĕсене шанса пана.

Анчах хăшпĕр шкулсемпе учителсем хăйсен пысăк задачине тивĕçлипе пурнăçласа пыраймаççĕ. Ку, паллах ĕнтĕ, учителсен коллективĕпе шкул директăрĕ начар ĕçленинчен килет.

Акă, сăмахран Мăн Ӳлхашра (Çĕмĕрле р.) икĕ шкул: пуçламăш шкулта 8 учитĕл, вăтам шкулта 15 учитĕл ĕçлеççĕ. Анчах çак икĕ коллектив пĕр-пĕринчен питĕ айăкра тăраççĕ. Вăтам шкулти учителсем пуçламăш шкулти учителсене кураймаççĕ, мăнкăмăлланса çӳреççĕ. Вăтам шкулта математикăпа вĕрентекен Маненков учитĕл пуçламăш шкулти учителсене „мелкая интеллигенция“ тесе хăртать.

Шкул директăрĕ Гвоздарев йулташ темиçе ĕçпе ĕçлет: директăр, местком председателĕ, политкружок руководителĕ т. ыт. те. Çапла вара, вăл коллективпа ĕçлеме „йерçеймест“. Анчах политзаняти хĕл каçиччен 5—6 хут, профсоюз членĕсен пухăвĕ те 3—4 хут çеç пулнă.

Шкул пуçлăхĕ С. Макевнин хăй учителсем çинчен елĕк сарса çӳреме çеç пĕлет. Çитменнине учителсем çинчен вĕренекен ачасене те елеклеме вĕрентет, вĕсене хăйсен учителĕсенчен сивтет. Февраль уйăхĕнче IV-мĕш „А“ класра ĕçлеме çĕнĕ учитĕл килнĕччĕ. Çав учитĕл çинчен IV-мĕш „А“ класра вĕренекен ачасене çапла кайса калана: „Сирĕн пата çĕнĕ учитĕл килнĕ, ку учителе ĕçрен кăларнă пулнă, халĕ ăна сирĕн пата тӳрленме йанă“ т. ыт. те. Çапла туса ачасене хăйех пăсса пĕтерчĕ. Çакна пула ĕнтĕ учителсем ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлеме пуçларĕç, саланса кайрĕç. 1937—38 вĕренӳ çулĕнче шкулти ачасен дисциплини тата ытларах йапăхрĕ, пĕр класа иккĕмĕш çула йулакансем кашни класрах 4—5-шер ача пулчĕç.

Çак коллективсенче аван ĕçлекен учителсем пур. Акă, сăмахран, вăтам шкулти учителсем П. Савельев, А. Савин тата пуçламăш шкулти А. Савадерăвă учительницă шкулта питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ. Анчах вĕсен ĕçне местком та, профсоюз райкомĕ те тивĕçлипе хакламаççĕ.

Гр. Петров—Ливаш.

## Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленеççĕ

ШĂХАСАН. Йамашри туллимар вăтам шкулăн ку таринччен учителсене пурăнма уйрăм çурт пулман. Халĕ 7 учитĕл пурăнмалăх çурт турĕç.

1938—39 вĕренӳ çулĕнче пĕтĕмпе 357 ача вĕренмеле. Вĕсене вĕренмели хатĕрсене: тетрать, ручкă, перо, каранташ т. ыт. те çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне тата кăçал кашни класах штукатуркă тунă.

Ал. Иванов.

ПАЛТАЙРИ (Йетĕрне р.) вăтам шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленессипе чылай пысăк ĕçсем турĕ. Халхи вăхăтра шкулăн кăмакисене йусаса пĕтерчĕç. Çĕнĕ партăсем, доскасем, сĕтел-пукансем хатĕр. Вĕренӳ çулĕ валли 10 пине йахăн тетрать тата учебниксем илсе хатĕрленĕ. Анчах çĕнĕ шкул çуртне тăвас ĕç йапăх пырать. Шкул тума кирлĕ материалсене хатĕрлес тĕлĕшпе Чурпай тата Йĕкĕт йалсовечĕсем нимĕн те тумаççĕ. Палтайри çĕнĕ шкул строительствипе райĕçтăвком та интересленмест.

М. Аниçимăв.

ЧУЛКĂМАКАРИ пуçламăш шкул çитес 1938—39 çулхи вĕренӳ çулне аван хатĕрленет.

Шкулăн урайĕсене, партăсене, доскасене йалтах сăрласа хунă. 1500 тенкĕлĕх вутă турттарса хатĕрленĕ. Çитес çул шкулта библиотекă пулмала, ун валли 500 тенкĕ хывнă.

Шкула кăçал çĕнĕрен вĕренме 53 ача илмеле. Вĕсем валли класcем çителĕклĕ.

С. Йефимăв.

## 69 çулхи купăççă

ЙЕТĔРНЕ. Кăташ йалсоветĕнчи „Хĕрлĕ çăлтăр“ колхоз членĕ Илья Çеменăв 49 çул ĕнтĕ купăс калать. Вăл тĕрлĕ йурăсемпе вăйă-ташă кĕввисене 100 йахăн пĕлет. Çеменăв халĕ 69 çулта.

П. Краснов.

Мускаври Л. М. Каганович йачĕпе тăракан прожектăр савăчĕн йатлă стахановеçĕ, слесăр С. Е. Леонтьев нормăна 400—500 процент тултарать. Ăна халĕ инструментсен цехĕн маçтăрĕнче ĕçлеме лартнă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: С. Е. Леонтьев (сылтăмра) А. В. Хохлов стахановеца кăтартусем парать.

А. Иоçелевич фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

## Колхоз драмкружокĕ

Колхозла йалăн культурă ыйтăвĕсем пысăккăн ӳсрĕç. Колхозниксем тĕп рольте суфлĕр „вылякан“ спектакльсене курасшăн мар, спектакль куракансем актĕрсем начар выляннинчен кулаççĕ. Вĕсем ĕнтĕ чăн-чăн искусствă тата хавасллăх ыйтаççĕ.

Халĕ республикăра 350 колхозра драмкружоксем ĕçлеççĕ, вĕсем хисепĕ йĕнчен те, пахалăхĕпе те ӳсеççĕ. Тĕслĕх Йетĕрне районĕнчи Пушнарти колхоз драмкружокне илер.

Ку драмкружока 1926 çулта комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксенчен 17 çынран организациленĕ. Вăл йаланах мар, вăхăтран вăхăта çеç ĕçленĕ. Ăна никам та пулăшман.

Халĕ вăл драмкружок коллективĕ актĕрсен хисепĕпе пахалăх йĕнчен палламала марах ӳсне. Пушнарти драмкружок халĕ хăватлă коллектив шутланать, унта 48 çын тăрать. Коллектив республикăра чи лайăх ĕçлекен колхоз драмкружокĕ пулса тăрать. Актĕрсем хăйсен квалификацине ӳстерне, план тăрăх ĕçлеççĕ, П. Оçипăван „Айтар“ тата „Кушар“, Кăлканăн „Анисса“ т. ыт. пьесăсене суфлĕрсăр лартма пултаракан пулнă.

Драмкружока йертсе пыраканĕ 29 çулхи колхозник, комсомолец Степан Алексейевич Токарев.

1937 çулхи йанвар уйăхĕнчен пуçласа 1938 çулхи ийулĕн 1-мĕшчен Пушнарти колхоз драмкружокĕ Йетĕрнепе Тутаркас районĕсенчи колхозсенче 49 спектакль лартса пана. Вăл спектакльсене 13.745 çын курнă.

Коллективăн талантлă артиссем пур. Н. Мокейев, И. Башмаков, Д. Шевер, Й. Фомичов, З. Мокейева, Й. Çмирнова т. ыт. те аван выляççĕ.

Кружок коллективĕн ĕçне чăрмантаракан çитменлĕхсем те пур. Вăл—костюмсемпе декораци çукки. Колхоз правленипе йалсовет ку çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмаççĕ.

Ф Лайдышев.

## Художествăлă выставкă

Ийулĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа Шупашкарта, чăвашсен тĕп музейĕнче, художествăлă выставкă уçăлнă. Выставкăна Улатăрти художествă училищинче вĕренекен студентсем ӳкернĕ 100 картинăна йахăн илсе килнĕ. Унпа пĕрлех выставкăра музейăн хăйĕн картинисем те нумай.

Выставкăри картинăсем пирĕн çамрăк художниксем ӳссе пынине кăтартса пăраççĕ. Вĕсен картинисенче хамăр республикăра социализм строительствин çитĕнĕвĕсем курăнса тăраççĕ.

## Активиссем лайăх ĕçленĕ çĕрте

Йĕпреç районĕнчи „Молния“ колхозра Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займа çырăнса илесси пысăк хастарлăхпа пырать. Колхозниксем пурĕ 2.310 тенкĕлĕх çырăнна, ийулĕн 27-мĕшне займ укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Займ облигацисене районри перекет кассинчен илсе, колхозниксене валеçсе пана.

Займ сарас ĕçре Симбирский тата Маргинăв йулташсем тăрăшса ĕçленĕ. Маргинăв йулташа лайăх ĕçленĕшĕн преми пана.

Çавăн пекех Йĕпреç поçолкинчи килхуçи хĕрарăмсем хушшинче те çĕнĕ займ çырăнасси пысăк хастарлăхпа иртнĕ. В. В Лешчова ĕçре тăман халăх хушшинче 725 тенкĕлĕх çырăнтарса 350 тенкĕ укçа пухса пана, Ахматовскайа 600 тенкĕлĕх çырăнтарса 150 тенкĕ укçа пухнă. Йĕпреç районĕ тăрăх илсен ийулĕн 27-мĕшĕ тĕлне рабочисемпе служащисем йĕнĕпе 6.500 тенкĕ, колхозниксем йĕнĕпе 3.500 тенкĕ укçа пухăннă. Районĕпе илсен çĕнĕ займа пурĕ 337 пин тенкĕлĕх йĕ иртнĕ çулхинчен 90 пин тенкĕлĕх ытларах çырăннă.

Ĕçе тата лайăхрах туса пымалли пур условисем те пур. Анчах партипе комсомол, совет, профсоюз тата ытти общественăлă организацисем çак ĕçе тивĕçлипе тытăнман. Комсодсем начар ĕçлеççĕ. Финанспа банк ĕçĕнчи работниксен ĕç планĕ те çук. Хăшпĕр работниксем çакăн пек ответсăрла ĕçленине пула нумай ĕççыннисем займа çырăнмасăр йулнă.

А. Мосолов.

## Займ хроники

** Мăн Йавăшри (Хĕрлĕ Чутай р.) вулав çурчĕн пуçлăхĕ Çмирнов тата агитатăрсемпе займ уполномоченнăйĕсем çĕнĕ займа сарас ĕçре лайăх ĕçлесе пычĕç. Ку вăхăта илсен 4.335 тенкĕлĕх çырăннă.

Й. Самарин.

** Çĕмĕрле районĕнчи Хутарти Ленин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем III-мĕш Пилĕкçуллăх займне пурте хаваслăн çырăнса илчĕç. Кунта пурĕ 4.210 тенкĕлĕх çырăннă.

П. Йакавлев.

** Чăваш вăрманпромсоюзĕн Кирерилаша обозĕнче ĕçлекен пур рабочисем те займ çырăннă. Лашапа ĕçлекен И. Созонкин 200 тенкĕлĕх, М. Волкăв 150 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Пурĕ обозра ĕçлекенсем 2.170 тенкĕлĕх çырăннă.

С. Миридонăв

Футбол

## Саранск—Шупашкар

Саранск хулинчи „Динамо“ команди икĕ кун хушши Шупашкарти футбол командисемпе йулташла тĕл пулса выляре. Малтанхи кун—ийулĕн 30-мĕшĕнче динамовецсем Шупашкарти „Темп“ командипе, 31-мĕшĕнче „Буревестник“ командипе выляреç.

Малтанхи кун вăйă 3:1 шутпа Саранск команди çĕнтерĕвĕпе пĕтрĕ.

Ийулĕн 31-мĕшĕнче Саранск команди Шупашкарти çамрăк командăпа—„Буревестникпе“ выляре. Вăйă 0:0 шутпа никам çĕнтерейменнипе пĕтрĕ.

Шупашкарти „Спартак“, Хусанти „Локомотив“ командисем хушшинче ийулĕн 29-мĕшĕнче пулнă вăйăра Шупашкарсем 4:1 шутпа çĕнтерчĕ. Спартаковецсем ийулĕн 31-мĕшĕнче Хусан чукун çулĕ çинчи сборнăй командăпа выляна. Вăйă 1:1 шутпа пĕтнĕ.

## Пулни-иртнисем

ШОФЕР-БАНДИТ. Ийулĕн 26-мĕшĕнче Канаш вăрманпромхоз шоферĕ Н. М. Потехин, автомашинăпа пынă чухне, Шăнкас йалĕнчи (Шупашкар р.) Й. Захарăва таптаса вĕлерне. Айăпран хăтăлас тесе, вăл автомашинăпа тарса çухална: анчах шофер-бандита çак кунах Канашра тытса арĕстленĕ.

ПУШАР. Ийулĕн 25-мĕшĕнче Бахмутски йалсовечĕн хирĕнче (Пăрачкав р.) пушар тухса 2.018 ыраш кĕлти çунса кайнă. Пушар И. Е. Корыстин вут-кăвара сыхланмасăр тыткаланинчен тухнă. Ĕçе тĕрĕслеççĕ.

ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН МĔНПУР ЧЛЕНĔСЕНЕ, ÇЕКЦИ ЧЛЕНĔСЕНЕ, ДЕПУТАТ ГРУППИСЕНЕ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ УРАМ КОМИТЕЧĔСЕНЕ ПĔЛТЕРНИ

Августăн 3-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре строителсен клубĕнче РХ тата КД Шупашкар Хули Совечĕн ЧЕРЕТЛĔ ПЛЕНУМĔ çак кун йĕркипе пулса иртет:

1. РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ çинчен РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ КАЛИНКИНА йулташ доклачĕ.
2. Хулари капиталлă строительства мĕнле пыни çинчен.
3. РХ тата КД Хула Совечĕ 1938 çулхи пĕрремĕш çур çулти бюджета тултарни çинчен.
4. Организацилĕ ыйтусем.

Пленума Хула Совет депутачĕсен обязательнă пымала тата çекци членĕсене, депутат групписене, урам комитечĕсене, хулари актива пыма чĕнеççĕ.

ХУЛА СОВЕЧĔ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

*Страховой çигнал постисем тата обчăлă страховой инспектăрсем*

# АСĂРХАМАЛЛИСЕМ

1. Страхлана пурлăха тĕрĕс пăхса усрамине тата сыхласа тăнине асăрхама, çавăнпа пĕрлех тата государства страхованийĕ çинчен йышăнна саккунсене пăснине хирĕç кĕрешме колхозсенче страховой çигнал постисене организацилеççĕ.

2. Страховой çигнал постисен членĕсене колхозниксен пухăвĕнче чи аван колхозниксемпе колхозницăсенчен, колхоз ĕçĕнчи чăн-чăн ударниксемпе стахановецсенчен суйлаççĕ.

3. Страховой сигнал постисене кашни колхозрах организацилемеле.

Пысăк колхозсенче страховой çигнал постисене кашни уйрăм фермăра йе бригадăра организацилеме йурать.

4. Кашни страховой сигнал пости, ĕç калăпăшне кура, 3—5 çынран тăрать. Пост членĕсем хăйсен йышĕнчен сигнал постин руководителĕне суйлаççĕ.

5. Çигнал постисен ĕçне тата вĕсен инструктăрĕсен ĕçне участкăри страховой инспектăрсем, çавăн пекех тата обчăлă страховой инспектăрсем йертсе пыраççĕ.

6. Страховой сигнал постисем хăйсем тунă ĕç çинчен финанс секцийне, çавăн пекех тата йалсовет президиумĕне тата колхозниксен пухăвне йаланах отчот парса тăраççĕ.

7. Хăйсен задачине лайăхрах пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе страховой çигнал [illegible]

[illegible]

... шанса ĕç пана ытти сынсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăраççĕ;

г) страхлана выльăх вилсен кашни расрах колхоз йалсовета вăхăтра пĕлтернине асăрхаççĕ;

д) йалсовета тата участкăри страховой инспектăра выльăх мĕнле сăлтавпа вилнине пĕлме пулăшаççĕ, тата страхлана выльăх вилнĕшĕн илмелли укçана тĕрĕс тата вăхăтра тавăрса панине асăрхаççĕ.

10. Калчасем патне сиреплетне страховой сигнал постисен членĕсем çак ĕçсене туса пыраççĕ:

а) кашни йалхуçалăх культури валли йышăнна агротехникăла йĕркесене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынине асăрхаççĕ;

б) тырпулсене уйран пухса кĕртнĕ чухне такаксем пуласșине хирĕç кĕрешеççĕ;

в) страхлана калчасем йе лартна йывăççем синенлĕсесен кашни колхоз страховой инспектăра вăхăтра пĕлтерине асăрхаççĕ;

г) колхоз, колхозниксен тата йединоличниксен хуçалăхĕсенче пулăна синенлĕхĕн сăлтавне тата калăпăшне тĕрĕс пĕлме участкăри страховой инспектăра пулăшаççĕ тата убыткăшăн тавăрса памали укçана тĕрĕс те вăхăтра панине асăрхаççĕ.

11. Пулă тытакан колхозсенчи страховой сигнал пости членĕсем [illegible]

[illegible]

... нал пости членĕсем районри финанс пайĕн пуçлăхне пĕлтереççĕ.

15. Страховой çигнал пости членĕсем колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче массăлла ăнлантарулă ĕçсем туса пыраççĕ, пурлăха ирĕклĕн страхлани ӳсси çинчен тата условисем çинчен ăнлантарса параççĕ; çавăн пекех тата пурлăха ирĕклĕн страхласси синчен ăнлантарса парса çав страхованине хăйсен йалĕнче пурăнакансем хушшинче туса ирттерме пулăшаççĕ.

16. Обчăлă страховой инспектăрсем йалсоветăн финанс çекцийĕ сумĕнче пулаççĕ, вĕсене чи аван, ĕçре тĕрĕсленнĕ страховой активист-колхозниксенчен уйăраççĕ, çавăн пекех тата обчественник-специалиссенчен: агрономсенчен, выльăх тухтăрсенчен, ветеринари фельдшĕрĕсенчен, пушар работникĕсенчен т. ыт. уйăраççĕ.

17. Обчăлă страховой инспектăрсене йалсоветсен финанс çекцийĕсем, комсомол тата профсоюз организацийĕсем уйăраççĕ, вара вĕсене районри (хулари) страховой инспекци çирĕплетет.

18. Обчăлă страховой инспектăрсен ĕçне участкăри страховой инспектăр йертсе пырать.

19. Обчăлă страховой инспектăрсем çакăн пек ĕçсене туса пыраççĕ:

[illegible]


*Врачсене,*

**сиплекен учрежденисене**

ТАТА

**пурне те пĕлсе тăма**

Чăваш Аптекă управлени, Шупашкар хуличе Карл Маркс урамĕ тăрăх (Спортивный переулок. д. № 3)

**хулари иккĕмĕш аптекă уçнă**

Аптекă рецептсем тăрăх емелсем хатĕрлесе парать, тата вак-тĕвек аптек таварĕсене, чирлĕ çынсене сипленĕ чух кирлĕ пулакан санитарипе гигийена йапалисене сутать.

Аптекра медицинă препарачĕсем тата аптекă таварĕсем çителĕклĕ пур.

Аптекă кашни кунах ирхине 9 сехетрен пуçласа каçхине 5 сехетчен уçă.

Чăваш Аптекоуправлени.

2—2

РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн

**Сĕнтĕрвăрринчи Çĕрйĕркелӳпе мелиораци техникумне**

**ПРЕПОДАВАТЕЛСЕМ КИРЛĔ:**

1. Вырăс чĕлхипе тата литературăпа.
2. Чăваш чĕлхипе тата литературăпа.
3. Физикăпа.
4. Историпе.
5. Физкультурăпа.

Ку дисциплинăсем тăрăх ĕçлекен преподавателсем хăйсен квалификацине тата стажне кура ĕçукçи 500 тенкĕрен 650 тенкĕ таран илме пултараççĕ.

2—2 Дирекци.

**Чăваш Аптек управленине**

ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ

**квалификацилĕ стольарсем, квалификацилĕ машинисткă, шофер**

**КИРЛĔ**

Адрес: г. Чебоксары, Аптечная улица 12.

2—1

Шупашкарти тĕрĕ тĕрлекен „Вышивка“ ертелне

**çак специальнăçсемпе**

**хĕрарăм работницăсем кирлĕ:**

Пир çине тĕслĕрен татăксемпе çĕлесе илемлĕ тĕрĕсем тăвакансем.

Çипрен тĕрлĕрен чĕнтĕр çыхакансем.

Машинăпа тата алăпа тĕрĕ тĕрлекенсем.

Чăлха, носки тата ытти кĕпе тумтирсене çыхакансем (трикотаж ĕçĕ).

Ĕçлеме килмешекенсен çак адреспе ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Калинина д. № 49. Телефон № 1—45.

ЕРТЕЛ ПРАВЛЕНИЙĔ.

2—2

Р С Ф С Р

Йустици Халăх Комиссариачĕн

**ЧĂВАШ ЙУРИДИЧЕСКИ ШКУЛĔ**

*1938—39 вĕренӳ çулĕнче вĕренме илесси çинчен*

*П Ĕ Л Т Е Р Е Т*

Шкулта пĕр çул вĕренмеле. Вĕренме арçынсемпе хĕрарăмсене 18 çултан пуçласа 40 çула çитиччен, 7 çул вĕреннисене илеççĕ. Шкула вĕренме кĕрес текенсен пĕр çултан кайа мар парти, совет, профсоюз тата комсомол ĕçĕнче ĕçлени кирлĕ.

Заявленисене августăн 12-мĕшчен илеççĕ. Августăн 12-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен вĕренме кĕме испытанисем пуса ирттеççĕ. Испытанисем политграмăтă, вырăс чĕлхи, чăваш чĕлхи, математикă предмечĕсем тăрăх пулаççĕ.

Заявленипе пĕрле çакăн пек документсене йамала: автобиографи, хăш çулта çурални çинчен свидетельства, вĕреннине пĕлтерекен документ; çар учотне тăни çинчен справкă, сывлăх пирки справкă, парти, комсомол, совет тата профсоюз организацисем панă характеристикă, виçĕ фотокартăчкă. Паспорта пĕрле илсе пымала.

Занятисем сентябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Шкула вĕренме килнисене 200 тенкĕ таран стипенди параççĕ, общежити пур.

Шкул—халăх следователĕсене, халăх судйисене тата прокурор помощникĕсене хатĕрлет.

Заявленипе документсене çак адреспе йамала: гор. Чебоксары, улица Калинина, 28, директору школы.

Асăрхаттарни: испытание шкул дирекцийĕ чĕннипе çеç пымала.

Дирекци.

**Чăвашсен Педагогикă Институчĕ**

**1938 çулхи августăн 1-мĕшĕпе сентябрĕн 1-мĕш хушшинче Чăваш республикинчи Учителсен Институтне кĕме хатĕрленекен курса кĕрес текенсен заявленисене илесси çинчен пĕлтерет.**

Курса вăтам шкулран йе 9-мĕш класран вĕренсе тухнисене тата техникум, педучилищă курсĕнче вĕренсе тухнисемпе [illegible] илеççĕ.

Заявленисене Чăваш Пединститут директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле йамала:

1) тĕплĕн çырнă автобиографи,
2) вăтам шкултан вĕренсе тухнă аттестат, подавать йе 9 класран пĕтĕм курс пĕтерни çинчен вĕренӳ дисциплинисемпе [illegible] пани çинчен, дисциплинăсем тăрăх хак пани çинчен кăтартса справкă,
3) паспорт (хăйпе пĕрле илсе пымала),
4) виçĕ фото-ӳкерчĕк ([illegible] 3×4 сантиметр виçепе ӳкерни) пулмала.

Курса илнисене 50%-не рабфак нормипе стипенди параççĕ.

Пединститутăн курсантсем валли общежити пулмаст.

Курса кĕнисене списокă çине кăçалхи августăн 25-мĕшпе сентябрĕн 1-мĕш хушшинче документсем тăратни тăрăх испытанисĕрех кĕртеççĕ.

Вĕренме илни çинчен пĕлтерӳ илсен пымала.

Адрес: г. Чебоксары, Чувашской АССР, Чувашпединститут.

Дирекци.

2—2


Уполномоченный Чувашглавлита № 410. Гор. Чебоксары, Типографии № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 663.